Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ОКТЯБРӖ 15 ШАМАТКУН 238(5051) №

Чӑваш Коммуне

21-мӗш ҫул тухать. ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн хаҫачӗ. Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн—2—87, ред. заместителӗн—3—97, редакци секретарӗн—4—40, парти пурнӑҫ пайӗн—0—85, ялхуҫалӑх пайӗн—4—97, советсен пайӗн—0—88, промышленнӑҫ пайӗн—7—97, ялкорсен пайӗн—2—30, дежурнӑйӗн—6—23.

Пичет—пропагандӑн хӑватлӑ хӗҫпӑшалӗ

Пӗтӗм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Парти историне тарӑнӑн вӗренни пирӗн кадрсене политикӑлӑ воспитани парас ӗҫре калама ҫук пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Малта пыракан революцилӗ теорине вӗренсе алла илни партире тӑракан тата партире тӑман большевиксен кӗрешӳ пултарулӑхне хӑпартать, вӗсене кирлӗ пек политикӑлӑ ҫирӗплӗх, малашлӑха уҫҫӑн курса тӑма, ориентировкӑ вӑйӗ, ӗҫре шанаҫлӑх парать.

Марксисӑм-ленинисӑм пропагандине тивӗҫлӗ теорилӗ вырӑна хӑпартас тӗлӗшпе, ПСК(б)П историйӗн идейӑсен пӗтӗм пуянлӑхне уҫса парас тӗлӗшпе тумалисене пурне те тӑвас пулать. Хӑйех те паллӑ, марксисӑм-ленинисӑм пропаганди—пропагандӑ ӗҫне организацилес ӗҫрте пулакан бӳрократла пӑсӑклӑхсене татӑклӑн пӗтерсен анчах ӑнаҫлӑн малала кайма пултарать. Ҫакӑн пек бӳрократла пӑсӑклӑхсем вӗсем ку таранччен пулса пынӑ, пирӗн коммуниссен политикӑлӑ ӳсӗмне чарса тӑнӑ.

Парти работникӗнчен парти вӗрентӗвӗ ҫинчен ыйтсан, вӑл ҫавӑнтах кружоксен хисепӗ ҫинчен, ҫак кружоксене „хутшӑнтарнӑ" коммуниссен хисепӗ ҫинчен калакан статистикӑлӑ сводкӑ туртса кӑларас йала пулнӑ. Малти вырӑнта чӗрӗ ҫынмар, унӑн ыйтӑвӗсемпе, кӑмӑлӗсемпе, пултарулӑхӗсемпе тухса тӑракан чӗрӗ ҫын мар, статистикӑ, цифрӑсем тӑнӑ. Парти организацисем парти пропаганди йенӗпе хӑйсен тӗп вӑйне пуринчен малтан кружоксене хисеп йенчен ӳстересси ҫине хунӑ, пропагандӑн пахалӑхӗ ҫинчен, пропагандӑ ӗҫӗн ӑшчикӗ ҫинчен шутласах кайман. Пропагандӑ ҫине ҫакӑн пек бӳрократла пӑхни школьарствӑ, вӗренекен предмет ҫине ҫийелтен пӑхасси патне илсе пынӑ. Интереслӑ пулмали ӗҫ коммунисшӑн темӗнле повиннӑҫ йышши ӗҫ пулса тӑнӑ.

Задачӑн тупсӑмне пӗлмесӗр иртнӗ вӑхӑтсенчи пекех ӗҫлеме шутлани ПСК(б) Партин историне пичетлесе кӑларнӑ хыҫҫӑн нумай парторганизацисем, пуринчен малтан, кружоксен хисепне ӳстерме, вӗренекенсене ытларах „ҫавӑрса" илме, пӗр сӑмахпа каласан, формальнӑй статистикӑ хыҫҫӑн кайма пӑхнинче те курӑнчӗ. Пӗтӗм тимлӗхе ӗҫӗн пӗр йенне—сӑмахлӑ пропагандӑна организацилес йенне йанӑ. Вара ӗҫӗн тепӗр тата та кирлӗрех йенӗ ҫинчен, пичетри пропагандӑ ҫинчен каҫарма ҫук манса хӑварнӑ. Пичетри пропагандӑ пирӗн ҫӗршывра уйрӑмах пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать.

Пирӗн парти пичете йаланах питӗ пысӑк вырӑна хунӑ. Ленин пичете мӗнле хак пани пурне те паллӑ. Пичет вӑл, В. И. Ленин каланӑ тӑрӑх, коллективлӑ пропагандис, коллективлӑ агитатӑр, коллетивлӑ организатӑр. Пичет урлӑ пирӗн парти куллен-кун массӑпа каласса тӑрать, вӗсене социалисӑмлӑ воспитани парса пырать, революцилӗ кӗрешӳ искусствине вӗрентет. „Пичетӗн кунсерен мар, сехетсерен ӳсе пымала, вӑл пирӗн партин чи ҫивӗч тата чи вӑйлӑ хӗҫпӑшалӗ",—тесе вӗрентет пире Сталин йулташ. Пирӗн ҫӗршывра пичетӗн хуҫи, пӗтӗм хаҫатсен, типографисен, издательствӑсен, библиотекӑсен хуҫи—халӑх пулса тӑрать. Пичет халӑх ӗҫне, хӑйӗн партийӗн ӗҫне тӑвать, унӑн халӑхӑнни пекех пӗр тӗллев, пӗр задачӑ. Большевикла пичет сӑмахӗ ӗҫҫыннисем хушшинче тивӗҫлипех те пысӑк авторитетпа усӑ курать, мӗншӗн тесен пирӗн пичет вӑл йаланах ӗҫҫыннисен масси ӗҫне туса пынӑ. Пичетри пропагандӑ мӗн пек пысӑк вӑй пулни ҫинчен, вӑл марксисӑм-ленинисӑм идейисене сарас ӗҫре мӗнле вырӑн йышӑнма пултарасси ҫинчен тата пултармали ҫинчен каласа тӑма кирлӗ-и вара!

Анчах та, сӑмахлӑ пропагандӑпа пичетри пропагандӑ хушшинчи уйрӑмлӑх ҫаплах тытӑнса тӑрать-ха. Пичет, тӗрӗссипе илсен, марксисӑм-ленинисӑм теорийӗ ҫинчен пропагандӑ тӑвас ӗҫӗн аиккинче тӑрать. Пропагандӑна пӗтӗмпе пекех кружоксенче, урӑхла каласан, сӑмахпа туса пыраҫҫӗ. Вӗренекенсем занятине пыраҫҫӗ, пропагандис каласа парать, вӗренекенсене ыйтусем парать, темӑ тӑрӑх заклюучени тӑвать, вара ҫакӑнпа занйати иртнӗ шутланать. Политикӑлӑ вӗрентӗвӗн ҫакнашкал форми коммуниссене ҫителӗклӗ пулма пултарать-и? Ҫук, пултараймасть. Кружоксем большевикла пропагандӑн тӗп форми пулма революцичченхи вӑхӑтра, пирӗн парти пытанса ӗҫленӗ вӑхӑтра, пирӗн партин вӑрттӑн пурӑнмала пулнӑ вӑхӑтра, кирлӗ пек кӗнекесем пулман вӑхӑтра, пичет капиталиссем аллинче тӑнӑ вӑхӑтра вырӑнлӑ пулнӑ. Халӗ те сӑмахлӑ пропагандӑ позицийӗ ҫинче кӑна йуласси йе тата унтан та начартарах — кружоксенче анчах пропагандӑ тӑвасси вӑл вара ӗҫре кустарничӗствӑ тӑвассине, пичет пек пысӑк вӑйа ахаль тытса тӑрассине, пирӗн пур пек майсене ансӑрлатассине пӗлтерет.

Пичетри пропагандӑ пропагандӑн хальхи вӑхӑтри форми пулса тӑрать, командӑй роль, сӑмах та ҫук, ун аллинче пулмала, пропагандӑ тума кирлисем пурте унӑн йенче. Вӑл вулакана темӑпа интереслентерме хӑнӑхтарать, ӑна хӑй халлӗн, пӗчӗк опекӑсӑр ӗҫлеме вӗрентет, первоисточниксемпе паллашма май парать, ҫӗнӗ ыйтусем патне илсе пырать, политикӑлӑ тавракурӑма аслӑлатать. Кӗнеке ҫинче хӑй тӗллӗн ларакан ҫынӑн хӑйӗн пултарулӑхне шанасси вӑйланать; вӑл хӑй ҫине урӑх куҫсемпе пӑхма пуҫлать. Ҫакӑн ҫинчен пайан пирӗн хаҫатра Мускаври пропагандис Назарӑв йулташ питӗ те уҫҫӑн каласа кӑтартать. Тӑтӑшах вулани вулакана хӑйӗн шухӑшӗсем пирки йулташӗсемпе калаҫса пӑхма хӑнӑхтарать, ҫӗнӗ ыйтусем ҫуралса тухаҫҫӗ, ӑс тӗпчекентерех пулать, вуласа пӗлнисем пуҫа тарӑн тата нумай вӑхӑта кӗрсе йулаҫҫӗ. Марксисӑм-ленинисӑма пичет урлӑ пропагандӑ туни—пысӑк ӗҫ, пӗтӗм партин ӗҫӗ, ку ӗҫе тӗрӗс организацилени кирлӗ. Теорилӗ статйасем, лекцисем, консультацисем, вулакансен ыйтӑвӗсене хирӗҫ панӑ ответсем пичетлесе кӑларни—ҫаксем пурте вӗсем пирӗн йертсе пыракан кадрсене, совет интеллигенцийӗн чи пысӑк сийӗсене политикӑлӑ воспитани парас ӗҫе малала йараҫҫӗ.

Пичетри пропагандӑ ҫавӑн пекех тата пирӗн партин чи лайӑх пропагандӑ вӑйӗсене палӑртма пулӑшӗ, ҫакӑн пек тума сӑмахлӑ пропагандӑ май паман. Калӑпӑр, пӗр-пӗр парторганизацире чаплӑ, хӑйӗн кружокӗсенче занйатисене талантлӑ ирттерекен пропагандис пултӑр. Ҫак кружокра вӗренекенсем хӑйсен руководителӗ пирки питӗ кӑмӑллӑ пулаҫҫӗ, ӑна вӗсем пахалаҫҫӗ. Анчах ҫак пропагандис тем пек лайӑх ҫын пулсан та, унӑн уссине вӑл йертсе пынипе вӗренекен 20—30 ҫын анчах кураҫҫӗ. Ҫак талантлӑ пропагандисӑн лекцийӗне журналра йе хаҫатра пичетлесе кӑларас пулсан, пӗтӗмпех урӑхла результат пулать. Унпала халӗ ӗнтӗ 20—30 ҫын мар, пиншер ҫынсем, вуншар, ҫӗршер пин ҫынсем паллашаҫҫӗ. Консультацисем ҫинчен те ҫавнах калама пулать. Кружоксенче те, парткабинетсенче те вӗренекенсен ыйтӑвӗсене питӗ лайӑх ответ паракан, консультацине питӗ тӗплӗн паракан пропагандиссем сахал мар. Мӗншӗн ҫавнашкал консультацисене, ҫавнашкал лайӑх ответсене пичетре ҫапса кӑлармала мар? Пропагандӑ ӗҫне вара вуншар ҫын мар, пиншер ҫын хутшӑннӑ пулӗччӗҫ. Акӑ мӗнре ӗнтӗ пичетри пропагандӑн вӑйӗпе пӗлтерӗшӗ!

Сӑмахлӑ пропагандӑпа пичетри пропагандӑ хушшинчи уйрӑмлӑха пӗтерес пулать. Пирӗн алӑра хаҫатсем, журналсем, кӗнекесем пулнӑ вӑхӑтра пичетри пропагандӑпа усӑ курассинчен пӑрӑнни илемсӗр йапала. Пропагандӑн кивелнӗ формисене, революцичченхи вӑхӑтра нуша пирки усӑ курмала пулнӑ формӑсене хальхи условисене механически куҫарса пыни киревсӗр йапала. Школьарствӑна, кружока пурне те тата пӗтӗмӗшпе „хутшӑнтарасси" хыҫҫӑн хӑвалас йӗркене пӑрахас пулать. Кружоксем кирлӗ, анчах вӗсем хальхинчен чылай сахал пулмала. Кружоксем марксисӑм-ленинисӑм пропагандинче пӗртен-пӗр формӑ ҫеҫ мар, ҫавӑн пекех тӗп формӑ та мар. ПСК(б)П историне пирӗн интеллигенци валли, пирӗн кадрсем валли, — хӑйсем тӗллӗн, алла кӑрандаш тытса ӗҫлеме пӗлекенсем валли кӑларнӑ. Пичетӗн марксисӑм-ленинисӑм ӗҫне Пӗтӗм Сойузӗпе пропагандӑ туса пыракан трибунӑ пулмала, вӑл обйазательнӑ пулать те.

Пысӑк та йывӑр задачӑсем тухса тӑраҫҫӗ пичет работникӗсем умне. Пирӗн пичет ку таранччен пропагандӑ ӗҫне питех те начар туса пыни ҫекрет мар. Теорилӗ темӑ тӑрӑх ҫырнӑ статйа пирӗн хаҫатсемпе журналсенче питӗ сайра-хутра тӗл пулакан йапала. Пичет работникӗсен теори ыйтӑвӗсем тӗлӗшӗнчен тутимаси пулман, хаҫатсем пропагандӑ содержанийӗпе интересленмен, „ҫавӑрса илесси" хыҫҫӑн хӑвалана, ӗҫӗн тӗпӗ-йӗрне пӗлмен. Пичетри пропагандӑна вӑйлатса йарасси пирӗн хаҫатсен ӗҫне чылайах ҫӗнетсе тухма хушать. Кунта чи кирли — хаҫатсем тавра, журналсем тавра чи лайӑх пропагандиссен вӑйне пӗтӗҫтересси, автӑрсен йаланхи кадрне туса хурасси, марксисӑм-ленинисӑм теорийӗн ыйтӑвӗсене квалификацилӗ, тӗплӗн ҫутатасси пулать. Пичет парти умӗнче пысӑк екзамен тытать, унӑн ҫак екзамена чыслӑн тытмала.

Пӗтӗм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Парти историне туни—пирӗн пӗтӗм кадрсене теори йенчен хатӗрлес, пиҫӗхтерес ӗҫре ҫӗнӗ тапхӑр пуҫласа йарать. Партире тӑракан тата партире тӑман большевиксен кадрӗсем марксисӑмленинисӑма тарӑнӑн вӗреиме тытӑнаҫҫӗ. Ҫак политикӑлӑ пысӑк ӗҫре пичетри пропагандӑн калама ҫук пысӑк вырӑн йышӑнса тӑмала пулать.

(„Правда" умстатйи, 1938 ҫулти октябӗрӗн 14-мӗш).

Героиня-летчиксем Комсомольскра

ХУЛАРИ АКТИВ ПУХӐВЕ

Октябӗрӗн 13-мӗшӗнче Амур ҫинчи Комсомольскра ҫамрӑксен хулине тӑвакансем, хула активӗ героиня-летчицӑсемпе тӗл пулса калаҫнӑ.

Тӑван ҫӗршывӑн мухтавлӑ хӗрӗсем Валентинӑ Гризодубӑвӑ тата Полинӑ Осипенко (Расковӑ йулташ врачсем канма хушнӑ пирки пыраймаи) президиума тухнине залри пӗтӗм халӑх нумайччен алӑ ҫупнипе кӗтсе илнӗ.

„Родина" самольот командирӗ Валентинӑ Степанӑвнӑ Гризодубӑвӑ йулташ екипаж йачӗпе Комсомольск хулинчи ӗҫҫыннисене саламланӑ тата екипажа ҫине тӑрса пулӑшнӑшӑн, ҫав тери ӑшшӑн кӗтсе илнӗшӗн тав тунӑ. Унтан Гризодубӑвӑ йулташ вӗҫев мӗнле иртни ҫинчен, тайгари пурнӑҫ ҫинчен, ҫавӑн пекех, Инҫет-Хӗвелтухӑҫӗнчи икӗ йуханшыв—Амгунь тата Амур тӑрӑх ҫӳренӗ чухне курса-илтнисем ҫинчен тӗплӗн каласа панӑ.

— Мускавран епӗр октябӗрӗн 24-мӗшӗнче 8 сехет те 12 минутра вӗҫсе тухрӑмӑр. Ҫул тӑршшӗпех начар ҫанталӑкра вӗҫмеле пулчӗ. Свердловск тӗлнеле пирӗн самольот пӑрланса шӑнса ларма тытӑнчӗ. Епӗр ҫӗре сайра-хутра ҫеҫ куракан пултӑмӑр. Унтан пӗлӗтсем хушшинче ним курмасӑр вӗҫмеле пулчӗ.

Ҫутӑлас умӗн Байкал кӳллинчен иртрӗмӗр, ҫӗре куртӑмӑр, анчах нумайлӑха мар. Каллех пӗлӗтлӗ ҫанталӑкра вӗҫмеле пулчӗ. Самольот 7.500 метра ҫити ҫӳле хӑпарса вӗҫрӗ. Унта сывлӑшри температурӑ сивӗ пулчӗ, 36 градуса ҫитрӗ. Кунсӑр пуҫне тата пирӗн ҫыхӑну пӗтсе ларчӗ. Чикӗ ҫывӑхӗнче ҫавӑн пек ҫӳлте вӗҫесси, ҫитменнине тата ҫӗрпе нимӗнле ҫыхӑну та пулмарӗ, хӑрушӑ йапала. Ҫавӑнпа та епӗр ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнеле вӗҫме тытӑнтӑмӑр.

Тугурск заливне ҫитнӗ хыҫҫӑн, епӗр Охотски тинӗс ҫыранӗсем тӑрӑх вӗҫме пуҫларӑмӑр. Ҫырансем тӑрӑх вӗҫсе Амур ҫине тухас та, унтан Хабаровска кайӑпӑр тесе шухӑшларӑмӑр. Амгунь шывӗ Амур шывӗпе пӗр йеннелех йухнӑ пирки, епӗр Амгуньа Амур шывӗ пуль тесе, ун тӑрӑх Кербине ҫитийех вӗҫрӗмӗр. Унта ҫитсен бензин пӗтрӗ пирӗн, вара епӗр анса ларма шут тытрӑмӑр. Расковӑ йулташ 2.000 метр ҫӳллӗшӗнчен парашӳтпа сиксе йулчӗ. Епӗр, Осипенкопа пӗрле шурлӑха лайӑх анса лартӑмӑр. „Родина" самольот пӗтӗмпех йусавлӑ йулчӗ, пӗр кантӑк та ванмарӗ. Расковӑ йулташа сикнӗ хыҫҫӑнах ҫил сӑрт-тусем хыҫне вӗҫтерсе кайнӑ. Унӑн парашӳчӗ йывӑҫран ҫакланса ларнӑ пулнӑ. Маринӑ парашӳта касса ҫӗре анса ларнӑ та, пире кӗтме тытӑннӑ. Епӗр Маринӑна пулӑшас тесе темиҫе хутчен пӑшал петӗмӗр. Анчах, сӑрттусем хушшинчи сасӑ, епӗр пенӗ пӑшал сасси сывлӑшра урӑх йенче илтӗнсе, Расковӑ йулташа улталанӑ. Расковӑ йулташ пирӗн пӑшал сасси илтӗннӗ йеннеле утнӑ, пирӗн пата тухатӑп тенӗ. Анчах вӑл тепӗр йеннеле кайнӑ пулнӑ. Авари тавраш пулсан кирлӗ запассем хунӑ мишука хӑйпе пӗрле илмерӗ вӑл. Епӗр ҫавӑн пек пӗр-пӗринчен уйрӑлса кайни нумай вӑхӑтлӑха мар пулӗ, тесе шухӑшланӑ вӑл. Унӑн кӗсйинче икӗ татӑк шоколад тата револьвӗрпе 18 патрон ҫеҫ пулнӑ. Ҫав „хатӗрсемпе" Расковӑ йулташ тайгара 10 кун хушши пурӑнчӗ.

Октябӗрӗн 3-мӗшӗнче ҫанталӑк тӗтрелӗ тата пӗлӗтлӗ тӑчӗ. Темле сасӑ илтрӗмӗр. Полинӑ мана: „Таҫта самольот вӗҫет"—тесе калать. Тайгара пирӗн хӑлхасем ҫивӗчленчӗҫ. Кашни шавах самольот вӗҫнӗн туйӑнать. „Самольот мар пуль", тетӗп епӗ Полинӑна. Шавланӑ сасӑ вӑйланса пырать. Пӑхатӑп, пӗр кайӑк куранса кайрӗ. Вӑл Сахӑрӑв йулташӑн самольочӗ пулнӑ иккен, ун ҫинчен кайран пӗлтӗмӗр. Есӗр пӗлетӗр-и, мӗнле хӗпӗртесе савӑннӑ епӗр ҫав вӑхӑтра! Самольот ҫаврӑнчӗ-ҫаврӑнчӗ те, кайала кайрӗ. Ҫав каҫхине епӗр питӗ лайӑх ҫывӑртӑмӑр.

Тепӗр кунне пирӗн пата каллех самольот вӗҫсе пычӗ, вӑл пире темтепӗр пӑрахса пачӗ: атӑсем, кӗрӗк-пиншаксем, ҫӑматӑсем, помидор, пурҫӑн тутӑр хунӑ конвертсем... унтан екипаж патне капитан Полежайӗв йулташ парашӳтпа ҫитсе тухрӗ, вӑл пирӗн пата сикнипе 301-мӗш хут сикнӗ. Ун хыҫҫӑнах пирӗн самольот патне аслӑ лейтенант Йеромин парашӳтпа анчӗ. Ҫав тери савӑнтӑмӑр епӗр. Йулташсен ҫӗнӗ ушкӑнӗ пырса ҫитнӗ хыҫҫӑн тата хытӑ савӑнтӑмӑр. Анчах пирӗн савӑнӑҫа пирӗнпе пӗрле Расковӑ йулташ ҫукки тӗксӗмлетрӗ.

Унтан Гризодубӑвӑ йулташ Маринӑ Расковӑ самольот ларнӑ лагер патне мӗнле пырса тухни ҫинчен каласа парать.

— Маринӑ пирӗн пата пырса тухни ҫав тери пысӑк телей пулса тӑни ҫинчен каламали те ҫук. Пурте пӗр ҫӗре пухӑнса ҫитрӗмӗр. Самольота витсе, йапаласене пухрӑмӑр та, шыв йеннеле утрӑмӑр. Маринӑна ноҫилкӑпа йатса пычӗҫ. Пире пулӑшма пынӑ йулташсенчен тӗлӗнмеле, геройсем вӗсем. Путакан шурлӑх урлӑ, тайгари йывӑҫсене касса вӗсем пире Амгунь шывӗ ҫине илсе тухрӗҫ. Ухатник Максимӑв йулташ шывра ишмелесем турӗ. Вӗсем ҫинче пӗр хускалмасӑр ларас пулать. Кайасса хытӑ кайаҫҫӗ вара. Вӑл кимӗсемпе ишме—пысӑк ӑсталӑх кирлӗ.

Кербире пире ҫавӑнтарчӗҫ, ӗҫтерчӗҫ, ҫитерчӗҫ. Унтан епӗр каллех Амгунь шывӗ патнеле утрӑмӑр. Амгунь ҫине тухсан катӗрпа Амур шывӗ ҫине тухрӑмӑр, Амур тӑрӑх кунта, сирӗн пата килтӗмӗр, Комсомольскра питӗ ӑшшӑн кӗтсе илтӗр. Спасибӑ, чӗререн спасибӑ!

Гризодубӑвӑ йулташ каланӑ чухне темиҫе хутчен тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ.

Гризодубӑвӑ йулташ хыҫҫӑн Сахӑрӑв летчик тухса калать. Вӑл самольота шырас ӗҫ мӗнле пулса иртни ҫинчен каласа парать. Ҫавӑн пекех пухӑннӑ ҫынсем Керби райӗҫтӑвком председателӗ Козлов йулташ сӑмахне те пысӑк тимлӗхпе итлеҫҫӗ.

Актив пухӑвӗ „Родина" самольотӑн паттӑр екипажне, социалисӑм ҫӗршывӗн хӑйулӑ хӗрӗсене пӑхса ҫитӗнтерекен Сталин йулташа чыслаҫа темиҫе хутчен нумай вӑхӑт хушши алӑ ҫупса тӑнипе хупӑнать. Залри ҫынсем пурте пысӑк ҫӗкленӳпе „Интернационал" йурлаҫҫӗ.

Пуху Сталин йулташ патне салам йама йышӑннӑ.

(ТАСС).

Тӑшмана ҫӗр ҫинче те, шыв ҫинче те, сывлӑшра та ҫӗмӗрӗпӗр

„Родина" самольот екипажӗ Хасан кӳлли районӗнчи ҫапӑҫусен паттӑр участникӗсем патне йанӑ салам

Йапони самурайӗсемпе пулса иртнӗ ҫапӑҫура, есӗр тӳсӗмлӗхе, геройлӑха, хӑйулӑха, Ленин-Сталин партине вӗҫӗмсӗр парӑннине лайӑх кӑтартса патӑр.

Тӑван ҫӗршыв кӗрешӗве чӗнсен,—арҫынӗ те, хӗрарӑмӗ те пурте Хӗрлӗ Ҫарӑн хӑйулӑ бойецӗсемпе пӗрле тухса ҫӗр ҫинче те, шыв ҫинче те, сывлӑшра та йулашки тумлам йун йулмиччен ҫапӑҫӑпӑр.

«Родина» самольотӑн екипажӗ кирек хӑш минутра та ҫар машинӗ ҫине ларса сывлӑш ҫар флочӗн бойецӗсемпе пӗрле партипе правительствӑ тата аслӑ Сталин панӑ кирек мӗнле йывӑр заданине те пурнӑҫа кӗртме хатӗр.

Сирӗн саламшӑн чӗререн тав тӑватпӑр. Сире ҫар техникине тата политикӑна вӗренес йенӗпе татах пысӑк ҫитӗнӳсем тума ырӑ сунатпӑр.

Гризодубӑвӑ.
Осипенко.
Расковӑ.

(ТАСС)

Амур ҫинчи Комсомольск, Октябӗрӗн 12-мӗш.

КОМСОМОЛЬСК—МУСКАВ

Радиотелефонпа ҫыхӑнса калаҫни

„Родина" самольот екипажӗ Комсомольска ҫитнӗ йатпа пулнӑ митинг хыҫҫӑн Амур ҫинчи Комсомольскран радиотелефон тӑрӑх Мускавпа ҫыхӑнса калаҫнӑ. Мускавра телефон патӗнче—Оборонӑ промышлӗннӑҫ Халӑх Комиссарӗ **М. М. Каганович** йулташ пулнӑ. Вӑл „Родина" самольот командирӗпе—**В. С. Гризодубӑвӑ** йулташпа калаҫнӑ. Каганович йулташ мухтавлӑ екипажа Сталин тата Молӑтӑв йулташсенчен салам калать. Гризодубӑвӑ йулташ екипаж йачӗпе Сталин йулташа вӗсемшӗн тӑрӑшнӑшӑн тав туса салам калама ыйтать.

Каганович йулташ летчицӑсен, уйрӑмах Расковӑ йулташӑн сывлӑхӗ мӗнли ҫинчен тӗплӗн ыйтса пӗлет.

— Пурте сывах, тет Гризодубӑвӑ йулташ, кӑмӑлсем лайӑх, хаваслӑ.

Вӗҫев штабӗнче телефон патне Гризодубӑвӑн ашшӗпе амӑшӗ, Полинӑ Осипенкӑн упӑшки, Маринӑ Расковӑн амӑшӗ, пиччӗшӗ тата хӗрачи пынӑ.

Йуратнӑ хӗрӗм, сывӑ пурӑнатӑн-и? тесе ыйтать Маринӑ Михайлӑвнӑ. Мӗнле пурӑнатӑн? Мӗнле отметкӑсемпе вӗренетӗн?

Таньа Расковӑн хӗрачи—амӑшне питӗ лайӑх пурӑнатӑп, отличнӑ паллӑсемпе вӗренетӗп, тесе ответлет.

— Часах иксӗмӗр тӗл пулатпӑр, тет Маринӑ Михайлӑвнӑ.

Пичет представителӗсем панӑ ыйтусем ҫине Гризодубӑвӑ йулташ: екипажӑн сывлӑхӗ питӗ лайӑх, тесе ответлет. Маринӑ Расковӑ халӗ те туйапа ҫӳрет, анчах халь вӑл хӑй тӗллӗнех ҫӳрет ӗнтӗ.

— Кербипе Комсомольск хушшинчи ҫул, тет Гризодубӑвӑ йулташ,—пире пӗрре те ывӑнтармарӗ. Пире ҫав тери ӑшшӑн йуратса пӑхрӗҫ, кашни утӑмра тенӗ пекех асӑрхаса пычӗҫ, ҫав тери ӑшшӑн кӗтсе илчӗҫ, ывӑннине те пӗлмерӗмӗр.

Летчицӑсем Комсомольскра икӗ кун, Расковӑ йулташ туйасӑр хӑй тӗллӗн ҫӳреме тытӑниччен, пурӑнма шухӑшлаҫҫӗ.

— Совет Сойузӗнчи ӗҫҫыннисене калӑр, тесе вӗҫлет Гризодубӑвӑ йулташ хӑйӗн сӑмахне, ҫынсем пурӑнман пушӑ вырӑна анса ларсан та епӗр пӗччен пулман, пирӗнпе пӗрле пӗтӗм Совет халӑхӗ пулнине, пирӗн Совет Сойузӗшӗн кашни ҫын хаклӑ пулнине епӗр лайӑх пӗлсе тӑнӑ.

Радиотелефонпа пулса иртнӗ калаҫу пӗр сехете йахӑн пынӑ.

(ТАСС).

Чехословакине фашиссем пайласа уйӑрни

Ҫентабӗрӗн 29-мӗшӗнче Мӳнхӗнра Гитлӗр, Муссолини, Чемберлен тата Даладйе килӗшӳ туса алӑ пусрӗҫ, ҫав килӗшӳ тӑрӑх Чехословакин Судет облӑҫне Германине пачӗҫ. Октябӗрӗн 1-мӗшӗнче Германи ҫарӗсем Судет облӑҫӗн территорийӗ ҫине кӗчӗҫ. Ҫакӑнпа пӗр вӑхӑтрах Польшӑ Чехословаки умне ультиматум кӑларса тӑратрӗ, Тешин Силезине Польшӑ ҫумне пӗрлештерме ыйтрӗ. Чехословаки правительстви ҫав ультиматума йышӑннӑ хыҫҫӑн, Польшӑ ҫарӗсем те Чехословакин чылай районӗсене кӗрсе йышӑнчӗҫ.

Гитлӗрпе Муссолини хӗтӗртсе тӑракан Венгри фашисӗсем те Чехословаки территорийӗ ҫине намӑссӑрӑн ала ҫӗклерӗҫ. Чехословаки правительстви Венгри требованийӗсене те пурнӑҫа кӗртме килӗшни ҫинчен пӗлтерчӗ. Ҫӑннипе илсен хальхи вӑхӑтра Чехословакине пайласа уйӑраҫҫӗ. Ҫӗркӑмрӑк кӑлармали районсене пурне те пекех, пир-авӑр, хими промышлӗннӑҫӗсен тата ытти тӗрлӗ промышлӗнӑҫсен центрӗсене Чехословакирен уйӑрса илеҫҫӗ. Чикӗри укрепленисем Германи аллине куҫрӗҫ, вӗсене Чехословаки республикӗ пурнӑҫӗн 20 ҫулӗ хушшинче туса ҫирӗплетнӗ. Гитлӗр, ҫавӑн пекех Польшӑпа Венгри фашисӗсем те, хӑйсем нумайранпа куҫ хывса пурӑннӑ территорисене ҫапӑҫусӑрах илчӗҫ.

Чехословакине фашиссем ҫапла уйӑрни вӑл, Франципе Англи правительствисен сутӑнчӑклӑ, предательле политики пирки ҫеҫ пулма пултарчӗ. Тӗнчери общӗствӑлӑ шухӑша ултала шутпа, Мӳнхӗнри килӗшӗве тӑвас умӗн Англипе Франци правительствисем вӑрҫа хатӗрленес йенпе вӑйлӑн ӗҫлерӗҫ. Вӑл хатӗрленӳсен тӗллевӗ ҫакӑнта пулнӑ: вӗсем, Гитлӗр требованийӗсене пурнӑҫа кӗртмесен вӑрҫӑ пулатех, тесе ӗнентересшӗн пулнӑ, вӑрҫӑ ҫывхарса киннӗ пек картинӑ туса хурасшӑн пулнӑ.

Анчах, Мӳнхӗнра кавар туни агрессӑрӑн кашкӑрла карланкине тӑрантмарӗ, ун пирки иккӗленмели ҫук. Шухӑшлас пулать, Германи фашисӑмӗ ҫывӑх вӑхӑтсенчех ҫӗнӗ территорисем ыйтӗ. Ун чухне Англипе Франци каллех намӑса ҫухатнӑ агрессӑрпа куҫа-куҫӑн тӗл пулмала пулӗ, анчах ун чухнехи условисем вӗсемшӗн чылай начартарах пулӗҫ.

Мӳнхӗнри намаслӑ капитуляци хыҫҫӑн уйрӑмӑнах Франци мӗскӗн условийе кӗрсе ӳкрӗ. Чехословакийе ҫухатса, вӑл хӑйӗн пуринчен те шанчӑклӑрах сойузникне ҫухатрӗ. Ҫӑннипе илсен Франци Иевропӑри иккӗмӗш вырӑнта тӑракан державӑ пулса пырать.

Ҫав вӑхӑтрах Чехословакине пайласа уйӑрни Германишӗн Балканри ҫӗршывсем ҫинеле тата Йевропӑн кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫӗ ҫинеле ҫул уҫса парать, унта Германи хаклӑ чӗртавар запасӗсене (Румыни нефтне, Йугослави бокситӗсене, Венгри тыррине) хӑй аллине ҫавӑрса илме тӑрӑшать, вӗсем ӑна малашне татах агрессилӗ ӗҫсем тума кирлӗ.

Ҫапла вара, Мӳнхӗнри килӗшӳ мирлӗ пурнӑҫа хӑтармасть кӑна мар, вӑл Иевропӑра ҫӗнӗ вӑрҫӑ тӗвви туса хурать. Капиталисӑмлӑ ҫӗршывсенчи реакцилӗ пичет, Мӳнхӗнри килӗшӳ „мирлӗ пурнӑҫа хӑтарать", тени вӑл—суйа, ултавлӑ йапала.

Мӳнхӗнре кавар туни Чехословакишӗн питӗ пысӑк сийенлӗ пулчӗ. Пуҫне ҫӗкленӗ реакци президенд Бенеша — Чехословаки республикине тунӑ ҫынсенчен пӗрне — отставкӑна тухмала туса хучӗ. Чехословакин ҫӗнӗ правительстви составне фашисла Германипе тата Италипе ҫывхарма тӑрӑшакан ҫынсем кӗнӗ, Мӳнхӗнри килӗшӳ тӑрӑх плебисцит (пӗтӗм халӑх кӑмӑлне ыйтса пӗлесси) ирттермеле пулнӑ районсене те вӑл правительствӑ Германине пачӗ. Словакире автономлӑ правительствӑ туса хунӑ. Вӑл правительствӑ, Германи фашисӗсем хушнӑ тӑрӑх, Словаки территорийӗ ҫинче Чехословакири компартине ӗҫлеме чарса лартнӑ тата ҫӗршыври пӗтӗм демократилӗ, прогрессивлӑ вӑйсене хирӗҫ поход пуҫланӑ.

Пысӑк хӑрушлӑхлӑ испытанисен сехетӗнче Чехословаки халӑхӗ хӑйӗн калама ҫук пысӑк ҫирӗплӗхне, республикӑ никама пӑхӑнса тӑмала маррине хӗҫпӑшал тытсах сыхлама хатӗр тӑнине кӑтартса пачӗ. Анчах, Англипе Франци правительствисем Чехословаки халӑхне улталаса тӑшмана сутрӗҫ. Ҫак тӗлӗнмеле киревсӗр предательствӑран Чехословаки халӑхӗ хӑй валли уроксем илет. Совет Сойузне — фашисла агрессӑрсем тӗлӗшпе ҫирӗп политикӑ тытса пыракан, вӗсемпе нимӗнле хура ӗҫ тума та килӗшмен пӗртен пӗр государствӑна йуратасси Чехословакире калама ҫук вӑйлӑн ӳссе пыни палӑрать.

Чехословаки халӑхӗ хӑй нацийӗ никама пӑхӑнмасӑр пурӑнассине чунтан-чӗререн сыхлама хатӗр тӑрать, вӑл ҫакна лайӑх пӗлет: татӑклӑ ҫӗнтерӳ ун йенче пулать.

Сентрал Ньйус агентстви пӗлтерни

ЛОНДӐН, октябӗрӗн 13-мӗш. Сентрал Ньйус агентстви Римран ҫапла пӗлтерет: вӑл авторитетлӑ ҫынсенчен пӗлнӗ тӑрӑх, Муссолини, Гитлӗр, Чемберлен тата Даладйе нойабӗр уйӑхӗнче каллех тӗл пулаҫҫӗ. Вӑл тӗлпулу Генуйӑра йе Неапольре пулмала, тесе шутлаҫҫӗ. Вӑл тӗлпулун тӗллевӗ—„тӑватӑ державӑ пактне" тӑвасси. Унта ҫавӑн пекех хӗҫпӑшаллану ҫинчен, колонисем ҫинчен тӑракан ыйтӑва та сӳтсе-йаваҫҫӗ. Хыпарсем тӑрӑх, тет агентствӑ, вӑл тӗлпулу вӑхӑтӗнче унта Йапони представителӗ те пулмала.

(ТАСС).

Пӗтӗм Сойузри Коммуниссен (бол̦шевиксен) Партин

ИСТОРИЙӖ

ПСК(б)П Тӗпкомӗн Комиççийӗ редакциленӗ. **КӖСКЕ КУРС.** *ПСК(б)П Тӗпкомӗ ырланă. 1938 ç.*

II-мӗш сыпăкăн йулашки

3. Роççийăри социал-демократла рабочи партин II-мӗш сйесӗ. Программăпа устава йышăнни тата пӗрлӗхлӗ парти туса хуни. Сйесра пулнă разногласисем тата партире икӗ йухăм: бол̦шевикла тата мен̦шевикла йухăмсем пулса кайни.

Çапла ӗнтӗ, Ленин принципӗсем çӗнтерни тата „Искра" хаçат Ленинăн организацилӗ, планӗпӗн анăçлăн кӗрешни парти тума, йе ун чухне калана пек, —чăн-чăн парти тума кирлӗ мӗнпур тӗп условисене хатӗрлесе çитерне. „Искра" çулйӗрӗ Роççийăри социал-демократла организацисем хушшинче çӗнтернӗ. Халӗ ӗнтӗ партин II-мӗш сйесне пухма май пулнă.

1903 çулта, ийулӗн 17(30)-мӗшӗнче РСДРП II-мӗш сйесӗ уçăлнă. Сйес йут çӗршывра, вăрттăн пухăннă. Унăн заседанийӗсем малтан Брӳççелре пулса пынă. Анчах кайарахпа Бел̦ги полицийӗ сйес делегачӗсене Бел̦гирен тухса кайма хушнă. Вара сйес Лондана куçнă.

Сйесра мӗн пурӗ 26 организацирен 43 делегат пулнă. Кашни комитет сйеса 2-шер делегат йама пултарнă, анчах хăшпӗр комитетсем пӗрер делегат кăна йанă. Çапла вара, 43 делегатăн 51 ӗç тăвакан саса пулнă.

Сйесăн чи тӗп задачи вăл—„Искра" хаçат сӗннӗ тата вăл туса хатӗрленӗ принциплӗ тата организацилӗ никӗс çинче чăн-чăн парти тăвасси" пулнă. (**Ленин**, т. VI, стр. 164).

Сйес составӗ пӗр пек пулман. „Економиссене" çӗмӗрсе тăкнă пирки, сйесра уççăн палăрса тăракан „економиссем" пулман. Анчах çав вăхăт хушшинче вӗсем хăйсен сăн-питне çав тери ăстан улăштарнă та хăйсен чылай делегачӗсене сйеса кӗртсе йама пултарнă. Кунсăр пуçне тата Бунд делегачӗсем „економиссенчен" сăмахпа çеç уйрăм тăнă, чăннипе вӗсем „економиссем" майлă пулнă.

Çапла ӗнтӗ, сйесра „Искра" майлисем кăна мар, ăна хирӗç пыракансем те пулнă. „Искра" майлисем 33 çын, урăхла каласан, вӗсем нумайтарах пулнă. Анчах хăйсене хăйсем искровӗçсем текенсем пурте чăн-чăн искровӗç-ленинӗçсем пулман. Делегатсем темиçе группировкăна уйăрăлса кайнă. Ленин майлисен, йе çирӗп искровӗçсен, 24 саса пулнă, 9 искровӗç Мартăв хыççăн пынă. Кусем çирӗп мар искровӗçсем пулнă. Делегатсен пӗр пайӗ „Искра"-па ăна хирӗç пыракансем хушшинче иккӗленсе тăнă—çавăн пеккисем сйесра 10 саса пулнă. Ку вăл—центр пулнă. „Искра"-на хирӗç уççăнах пыракансен 8 саса пулнă (3 „економист" тата 5 бундовӗç). Искровӗçсем пӗр-пӗринпе килӗшмесӗр уйăрăлса кайсанах, „Искра" тăшманӗсем çийеле тухма пултарнă.

Сйесра мӗнле йăвăр лару-тăру пулни çакăнтан лайăх куранса тăрат̦ ӗнтӗ. Сйесра, „Искра" çӗнтертӗр тесе, Ленин пит те нумай вăй хунă.

Сйесăн чи кирлӗ ӗçӗ вăл—парти программине йышăнасси пулнă. Чи тӗп ыйту вăл—пролетариат диктатури ыйтăвӗ пулнă, программăна сӳтсе-йавнă чухне сйесăн оппортунисла пайӗ çав ыйтăва хирӗç пулнă. Оппортуниссем çаплах тата сйесăн револ̦уцилӗ пайӗпе программăн ытти ыйтăвӗсем тăрăх та килӗшмен. Анчах та вӗсем, пуринчен ытла, пролетариат диктатури ыйтăвӗ пирки хытă кӗрешме шутланă. Оппортуниссем каланă: йут çӗршывсенчи социал-демократла партисен нумайӗшӗсен хăйсен программинче пролетариат диктатури çинчен калакан пункт çук, çавăнпа та Роççийăри социал-демократсен программине пролетариат диктатури çинчен каланине кӗртмесен те йурӗччӗ, тенӗ.

Оппортуниссем çавăн пекех парти программине хресчен ыйтăвӗн требованисене кӗртессине те хирӗç пулнă. Çав çынсем револ̦уцишӗн пулман, çавăнпа та вӗсем рабочи клас сойузникӗсенчен— хресченсенчен йутшăннă, ун çине сиввӗн пăхнă.

Бундовӗçсемпе Пол̦шă социал-демокрачӗсем нацисен самоопределени правине хирӗç пулнă. Ленин йаланах рабочи клас нацилӗ пусмăрлăха хирӗç кӗрешме тивӗçлӗ, тесе вӗрентнӗ. Программăра çав требованине хирӗç пулни вăл—пролетарилӗ интернационалисăма пăрахăç тума, нацилӗ пусмăрлăха пулăшма сӗннипе пӗрех пулнă.

Çак хирӗç пыракан шухăшсене Ленин пит те хытăн çапса хуçнă.

Сйес „Искра" сӗннӗ программăна йышăннă.

Çав программăра икӗ пай пулнă —программă-максимум тата программă-минимум. Программă-максимумра рабочи клас партийӗн чи тӗп задачи çинчен— социалисăмлă револ̦уци çинчен, капиталиссен влаçне сирпӗтсе антарасси çинчен, пролетариат диктатурине тăвасси çинчен каланă. Программă-минимумра партин капиталисăмлă стройа сирпӗтсе антарачен, пролетариат диктатурине тăвиччен малтанах пурнăçа кӗртсе пымалли çывăх вăхăтри задачисем çинчен: патша самодержавине сирпӗтсе антарасси, демократилӗ республикă тăвасси, рабочисемшӗн 8 сехетлӗ ӗç кунӗ тăвасси, йалта крепостной йӗрке йулашкийӗсене пурне те пӗтересси, помещиксем хресченсенчен туртса илнӗ çӗрсене („отрезкăсене") кайала тавăрса парасси çинчен каланă.

Малашне „отрезкăсене" кайала тавăрса парасси çинчен калакан требованине бол̦шевиксем помещиксен мӗнпур çӗрӗсене конфискацилес требованипе улăштарнă.

II-мӗш сйесра йышăннă программă рабочи клас партийӗн револ̦уцилӗ программи пулнă.

Çав программă партин VIII-мӗш сйесӗччен йулнă. Пирӗн парти пролетарилӗ револ̦уци çӗнтернӗ хыççăн çӗнӗ программă йышăннă.

Программăна йышăннă хыççăн, партин II-мӗш сйесӗ парти уставӗн пройектне сӳтсе-йавма тытăннă. Программă йышăнса тата партине идейа тӗлӗшпе пӗрлештерме никӗс туса, сйесăн çавăн пекех тата, парти кустарничӗствăпа кружковщинăна, организацилӗ сапаланчăклăха тата çирӗп дисциплинă çуккине пӗтерме, парти уставне йышăнмала пулнă.

Анчах та, программăна йышăнасси чылай тикӗс иртнӗ пулсан, парти уставӗ пирки вара сйесра пит те вăйлă тавлашу тухса кайнă. Пуринчен ытла вăйлă разногласисем уставăн пӗрремӗш параграфӗн формулировки пирки—парти членӗнче кам тăма пултарни çинчен калакан параграф пирки сарăлса кайнă. Парти членӗ пулма кам пултарат̦, парти составӗ мӗнле пулмала, организацилӗх тӗлӗшӗнчен парти мӗнле пулмала—организацилӗ пӗр пӗтӗм йе формăланман йапала пек пулмала-и—çавăн пек ыйтусем тухса тăнă уставăн пӗрремӗш параграфӗ пирки. Икӗ формулировкă кӗрешнӗ: Ленин формулировки, ун майлă Плеханăвпа çирӗп искровӗçсем тăнă, тата Мартăв формулировки, ун майлă Аксел̦род, Засулич, çирӗп мар искровӗçсем, Троцкий тата сйесăн пӗтӗм уççăнах-оппортунисла пайӗ тăнă.

Ленин формулировки çапла каланă: парти программине йышăнакан, партине материал̦нăй пулăшу парса пыракан тата унăн организацийӗсенчен пӗринче члента тăракан кашни çын парти членӗ пулма пултарат̦, тенӗ. Мартăв формулировки вара программăна йышăннине тата материал̦нăй пулăшу парса тăнине партире члента тăмали услови пулат̦ тесе шутласа, çав вăхăтрах парти организацийӗсенчен пӗринче члента тăрасси парти членӗнче тăма кирлӗ услови пулмаст̦, парти членӗ парти организацийӗсенчен пӗринче члента тăмасан та пултарат̦, тесе шутланă.

Ленин парти çине çапла пăхнă: парти вăл—**организациленнӗ** отрйад пулса тăрат̦, унăн членӗсем парти ретне хăйсене хăйсем мар кӗртеççӗ, вӗсене парти ретне парти организацийӗсенчен пӗри илет, апла пулсан, вӗсем парти дисциплинине пăхăнаççӗ, тенӗ. Мартăв вара парти çине урăхла пăхнă, вăл каланă тăрăх, парти вăл темӗнле формăланман йапала пек пулнă, унăн членӗсем парти ретне хăйсене хăйсемех кӗртеççӗ, çапла вара, вӗсем парти организацийӗсенчен пӗринче тăмаççӗ пулсан, парти дисциплинине пăхăнма та тивӗçлӗ мар.

Çапла вара, Мартăв формулировки, Ленин формулировкинчен урăхла пулса, çирӗп мар, пролетарилӗ мар елементсемшӗн парти алăкӗсене сарлакан уçса панă. Буржуалă-демократилӗ револ̦уци пулас умӗн буржуалă интеллигенци хушшинче вăхăтлăха револ̦уцине кăмăллакан çынсем те пулнă. Вӗсем хăшпӗр чухне партине пысăк мар пулăшусем те пама пултарнă. Анчах çав çынсем организацине кӗмен пулӗччӗç, парти дисциплинине пăхăнмӗччӗç, парти хушнă ӗçсене туса пымӗччӗç, çав ӗçсене тунипе хăйсене хăрушлăх кӳмен пулӗччӗç. Çавăн пек çынсене ӗнтӗ Мартăвпа ытти мен̦шевиксем парти членӗсем тесе шутлама сӗннӗ, вӗсене права парса парти ӗçӗсене хутшăнма май пама сӗннӗ. Вӗсем стачка хутшăннă кашни çыннах, стачкăра социалис маррисем те, анархиссем, есерсем пулнă пулсан та, çав етемсене хăйсене хăйсем парти членӗ тесе „шутлама" ирӗк пама сӗннӗ.

Çапла пулса тăнă: Ленинпа ленинӗçсем сйесра пӗрлӗхлӗ те çирӗп, паттăр, лайăх организациленнӗ парти тăвас тесе кӗрешнӗ вăхăтра, мартăвӗçсем тӗрлӗ çынсенчен тăракан, çемçешке, формăланман парти тăвасшăн пулнă. Çавнашкал парти паттăр парти пулма пултарайман, мӗншӗн тесен, вăл тӗрлӗ çынсенчен тăракан парти пулса тăнă пирки, çирӗп дисциплинăлă пулман пулӗччӗ.

Çирӗп мар искровӗçсем çирӗп искровӗçсенчен уйăрăлса кайнă, вӗсем центрпа сойуз тунă тата вӗсен çумне уççăнах оппортуниссем хутшăннă пирки çав ыйтура Мартăв ытларах саса илнӗ. Сйес ытларах сасăпа, уставăн пӗрремӗш параграфне Мартăв формулировкипе йышăннă. Мартăв майлă 28 саса пулнă, хирӗç 22 саса, пӗри сасăламасăр тытăнса тăнă.

Искровӗçсем икӗ пайа уйăрăлнă хыççăн уставăн пӗрремӗш параграфӗ тăрăх сйесра кӗрешӳ тата та ытларах çивӗчленсе кайнă. Сйес хăйӗн ӗçне пӗтересси патне, партин йертсе пыракан учреждениисене — партин тӗп органӗн („Искра") редакцине тата Тӗп Комитета суйласси патне çывхарса пынă. Анчах, сйес çав учреждениисене суйлама тытăниччен, темиçе ӗç пулса иртнӗ, вӗсем сйесри вăйсен шайне тепӗр майлă улăштарса йанă.

Парти уставне сӳтсе-йавнă май партин Бунд ӗçне пăхса тухмала пулнă. Бунд партире хăйне уйрăм вырăн йышăнса тăрасшăн пулнă. Вăл хăйне Роççийăри йеврей рабочийӗсен пӗртенпӗр представителӗ тесе йышăнма ыйтнă. Бундăн çак требованийӗпе килӗшни парти организацийӗсенче рабочисене наци тăрăх уйăрнине, рабочи класăн пӗр пӗтӗм каслă территорилӗ организацийӗсене пăрахăçа кăларнине пӗлтернӗ. Сйес Бундăн организацилӗ националисăмне йышăнман. Вара бундовӗçсем сйесран тухса кайнă. Сйес „економиссен" йут çӗршыври сойузне партин йут çӗршыври представителӗ тесе йышăнман пирки сйесран тата икӗ „економис" тухса кайнă.

Сйесран çичӗ оппортунис тухса кайни сйесри вăйсен шайне ленинӗçсемшӗн усăлă туса хунă.

Партин тӗп учреждениисен составӗ пирки тăракан ыйту çине Ленин малтанах пит те тимлӗн çаврăнса пăхнă. Тӗп Комитета Ленин çирӗп, чăн-чăн револ̦уционерсене суйлама кирлӗ тесе шутланă. Мартăвӗçсем Тӗп Комитетра çирӗп мар, оппортунисла елементсем ытларах пулччăр тесе тăрăшнă. Сйесăн нумайтарах пайӗ ку ыйтура Ленин хыççăн кайнă. Тӗп Комитета Ленин майлă тăракансене суйланă.

Ленин сӗннӗ тăрăх, „Искра" редакцине Ленина, Плеханăва тата Мартăва суйланă. Сйесра Мартăв „Искра" редакцине „Искран" ӗлӗкхи ултă редакторӗсене пурне те суйлама хушнă вӗсенчен нумайӗшӗ Мартăв майлă пулнă. Сйес нумайтарах сасăпа çав сӗнӗве йышăнман. Ленин сӗннӗ виçӗ çынна суйланă. Çавăн хыççăн вара Мартăв, тӗп органăн редакцине кӗместӗп, тесе каланă.

Çапла вара, партин тӗп органӗсене суйлас ыйтупа сйес Мартăв майлисене çӗнтернине тата Ленин майлисен çӗнтерӳне çирӗплетсе хăварнă.

Çак вăхăтран вара Ленин майлисене, сйесра суйлав вăхăтӗнче нумайтарах саса илнисене, бол̦шевиксем тесе калама пуçланă, Ленина хирӗç пыракансене, сахалтарах саса илнисене, мен̦шевиксем теме пуçланă.

II-мӗш сйес ӗçӗсен итогӗсене туса, çакăн пек вывăдсем тума пулат̦:

1) Сйес марксисăм „економисăма", уççăнах оппортунисăма, çӗнтернине çирӗплетсе хăварнă;

2) Сйес программăпа устав йышăнна, социал-демократла партине туса хунă, çапла вара, пӗрлӗхлӗ парти вал̦л̦и рамкă тунă;

3) Сйес, партине икӗ пайа—бол̦шевиксем тата мен̦шевиксем çине уйăрнă организацилӗ пысăк разногласисем пуррине уçса палăртнă. Бол̦шевиксем револ̦уцилӗ социал-демократин организацилӗ принципӗсене хӳтленӗ, мен̦шевиксем организацилӗ йӗркесӗрлӗх лачакине, оппортунисăм лачакине путса пынă:

4) Сйес çакна кăтартса панă: парти çӗмӗрсе тăкнă ӗлӗкхи оппортуниссен вырăнне, „економиссен" вырăнне—партире çӗнӗ оппортуниссем—мен̦шевиксем йышăнма тытăннине кăтартса панă;

5) Сйес организацилӗ ыйтусем тӗлӗшӗнчен хăйне тивӗçлӗ çӳлӗ вырăнта пулайман, иккӗленнӗ пулнă, сйесра хăш чухне мен̦шевиксем те вăй илнӗ, ӗçсем йулашкинчен тӳрленнӗ пулсан та, çапах организацилӗ ыйтусенче сйес мен̦шевиксен оппортунисăмне тăрă шыв çине кăларма тата вӗсене партире хăйсене уйрăм тăратса хăварма пултарайман çеç мар, парти умне çавăн пек задача лартма та пултарайман.

Çак ӗнтӗ сйес хыççăн бол̦шевиксемпе мен̦шевиксен хушшинчи кӗрешӳ лăпланма кăна мар, йалтах урăхла, вăл тата та ытларах çивӗчленсе кайнин тӗп сăлтавӗсенчен пӗри пулнă.

4. Мен̦шевикла лидӗрсен раскол̦никла ӗçӗсем тата II-мӗш сйес хыççăн парти ăшӗнче кӗрешӳ çивӗчленсе кайни. Мен̦шевиксен оппортунисăмӗ. Ленинăн „Шаг вперед, два шага назад" йатлă кӗнеки. Марксисла партин организацилӗ никӗсӗсем.

II-мӗш сйес хыççăн парти ăшӗнче кӗрешӳ тата ытларах çивӗчленсе кайнă. Мен̦шевиксем партин II-мӗш сйесӗн решенисене пурнăçа кӗртессине хирӗç мӗнпур вăйпа тăрса, партин центрӗсене çавăрса илме тăрăшнă. Мен̦шевиксем „Искра" редакцине тата Тӗпкома хăйсен представителӗсене редакцинче хăйсем нумайраххăн пулмала тата Тӗпкомра мен̦шевиксен хисепӗ бол̦шевиксемпе пӗр тан пулмала хисеппе кӗртме ыйтнă. Çакă вăл II-мӗш сйес решенийӗсене тӳрех хирӗç пынă пирки, бол̦шевиксем мен̦шевиксен требованине йышăнман. Çакăн хыççăн вара мен̦шевиксем партирен вăрттăн хăйсен партине хирӗçле фракцилӗ организацине тунă, вăл организаци пуçӗнче Мартăв, Троцкий тата Аксел̦род тăнă; вӗсем, Мартăв çырнă пек каласан, „ленинисăма хирӗç восстани çӗкленӗ". Партине хирӗç кӗрешме вӗсем—„партин пӗтӗм ӗçне йӗркерен кăларас, ӗçе пăсас, пурне те пӗтӗмпех чарса лартас" (Ленин сăмахӗ) меслете суйласа илнӗ. Вӗсем вырăс социал-демокрачӗсен „Заграничная Лига" тенӗ организацине кӗрсе ларнă та; вӗсем унтан вара партине, Ленина, ленинӗçсене хирӗç персе тăма тытăннă, вăл организацинче 9/10 пайӗ Роççийăри ӗçрен татăлнă интеллигент-емигрантсем пулнă.

Мен̦шевиксене Плеханăв пит те вăйлă пулăшнă. II-мӗш сйесра Плеханăв Ленинпа пӗрле пынă. Анчах II-мӗш сйес хыççăн Плеханăв мен̦шевиксем раскол тăвассипе йунанинчен хăраса ӳкнӗ. Вăл мен̦шевиксемпе кирек мӗнле пулсан та „килӗшме" шут тытнă. Мен̦шевиксем патне Плеханăва унăн ӗлӗкхи оппортунисла йăнăшӗсем туртнă. Оппортунис-мен̦шевиксемпе килӗштерекенрен Плеханăв часах хăй те мен̦шевик пулса тăнă. Сйес йышăнман ӗлӗкхи редактăр-мен̦шевиксене пурне те Плеханăв „Искра" редакцин составне кӗртме ыйтнă. Ленин, паллах, çакăнпа килӗшме пултарайман, вăл вара, партин Тӗпкомӗнче çирӗпленсе ларса, çак позицирен оппортуниссене çӗмӗрсе пырас тесе, „Искра" редакцийӗнчен тухнă. Плеханăв хăй пӗччен, сйесăн ирӗкне пăсса, „Искра" редакцин составне ӗлӗкхи редактăр-мен̦шевиксене кӗртнӗ. Çакăнтан пуçласа, „Искран" 52 №-чен пуçласа, мен̦шевиксем ăна хăйсен органӗ туса хунă та, „Искра" урлă хăйсен оппортунисла шухăшӗсене сарма пуçланă.

Çак вăхăтранпа партире **кивӗ** „Искра" çинчен, ленинла, бол̦шевикла „Искра" çинчен, тата **çӗнӗ** „Искра" çинчен, мен̦шевикла, оппортунисла „Искра" çинчен калаçма пуçланă.

„Искра" мен̦шевиксен аллине куçнăранпа, вăл Ленина, бол̦шевиксене хирӗç кӗрешекен орган пулса тăнă, мен̦шевикла оппортунисăма, нимрен малтан, организацилӗ ыйтусем тӗлӗшпе пропагандăлакан орган пулса тăнă. „Економиссемпе" тата бундовӗçсемпе пӗрлешсе, мен̦шевиксем „Искра" страницисем çинче, вӗсем каланă пек, ленинисăма хирӗç поход пуçласа йанă. Плеханăв примиренчӗствăн позицийӗсем çинче чăтса тăма пултарайман, вара кăшт вăхăт иртсен, вăл та похода пӗрлешсе кайнă. Йапаласен логики тăрăх вăл çапла пулмала пулнă та: кам оппортуниссемпе килӗштерме сӗнет, вăл оппортунисăм патне шуса анмала. Çӗнӗ „Искра" страницисенчен, çӳпçерен йухнă пекех: парти организацилӗ пӗрпӗтӗм пулмала мар, парти составне унăн органӗсен решенийӗсене пăхăнса тăман ирӗклӗ группăсемпе пӗччен çынсене те илме кирлӗ, кашни интеллигента, партине кăмăллакана, çавăн пекех, „кашни стачечнике", „кашни демонстранта" хăйне парти членӗ теме ирӗк памала, партин пур решенийӗсене те пăхăнса тăма хушни вăл ӗç çине „формал̦нă-бӳрократла" пăхни пулат̦, сахалтарахăшӗ нумайтарахăшне пăхăнса тăмала туни вăл парти членӗн ирӗкне „механически путарса лартни" пулат̦, парти членӗсене пурне те,—лидӗрсене те, рйадовой членсене те,—парти дисциплинине пӗрпек пăхăнса тăма хушни вăл партире „крепостной права" туса лартни пулат̦, „пире" партире централисăм мар, партин уйрăм çыннисемпе организацийӗсене партин решенийӗсене пурнăçа кӗртмесӗр тăма права паракан анархисла „автономисăм" кирлӗ, тесе зайавленисем тата статйасем сирпӗнме пуçланă.

Çакă вăл организацилӗ йӗркесӗрлӗхе, партилӗхпе парти дисциплинине хавшатассине, интеллигентла индивидуалисăма мухтассине, анархисла дисциплинăсăрлăха тӳрре кăларассине иртӗнсе кайсах пропагандăлани пулнă.

Мен̦шевиксем партине II-мӗш сйесран кусӗретех кайала организацилӗ сапăнчăклăх патне, кружковщинă патне, кустарничӗствă патне туртнă.

Мен̦шевиксене татăклă отпор памала пулнă.

Çак отпора Ленин 1904 çулти май уйăхӗнче тухнă хăйӗн „Шаг вперед, два шага назад" йатлă чаплă кӗнекинче панă.

Акă çав кӗнекере Ленин тарăнăн çутатса çырнă тӗп организацилӗ положенисем, вăл положенисем кайран бол̦шевикла партин организацилӗ никӗсӗсем пулса тăнă.

1) Марксисла парти вăл—рабочи класăн пайӗ, унăн отрйачӗ. Анчах рабочи класăн отрйадсем нумай,—апла пулсан, рабочи класăн кирек мӗнле отрйадне те рабочи класăн партийӗ тесе калама çук. Парти рабочи класăн ытти отрйачӗсенчен пуринчен малтан çакăнпа уйăрăлса тăрат̦: вăл рабочи класăн ахал̦ кăна отрйачӗ мар, вăл **малта пыракан** отрйад, **ăстăнлă** отрйад, **марксистла** отрйад пулса тăрат̦, вăл общӗствă пурнăçне пӗлнипе, общӗствă пурнăçӗ аталаннин саккунӗсене пӗлнипе, клас кӗрешӗвӗн саккунӗсене пӗлнипе хӗçпăшалланнă, çавна пула вăл рабочи класа илсе пыма, унăн кӗрешӗвне йертсе пыма пултарат̦. Çавăнпа та пайа пӗрпӗтӗмпе пăтраштарма çук, çавăн пекех, партипе рабочи класа та пăтраштарма çук, кашни стачечникех хăйне парти членӗ теме пултартăр тесе ыйтма çук, мӗншӗн тесен кам партине класпа пăтраштарат̦, вăл партин ăстăнлăхне „кашни стачечник" виçи таран антарса лартат̦, вăл партине, рабочи класăн малта пыракан ăстăнлă отрйадне, пӗтерсе лартат̦. Партин задачи —хăйӗн çӳлӗшне „кашни стачечник" виçи таран **антарса лартассинче** мар, парти çӳлӗшӗ таран рабочисен массине **хăпартассинче**, „кашни стачечнике" **хăпартассинче** пулса тăрат̦.

„Епӗр—класăн партийӗ, тесе çырнă Ленин, çавăнпа та **пӗтӗм класăн тенӗ пекех** (вăрçă вăхăтӗнче, граждан вăрçи епохинче шăпах пӗтӗм класăн та) пирӗн парти йертсе пынипе ӗçлемеле, пирӗн парти çумне мӗн май килнӗ таран тачăрах пӗрлешсе тăмала, анчах капиталисăм вăхăтӗнче хăçан та пулин пӗтӗм клас тенӗ пекех йе пӗтӗм клас хăйӗн малти отрйачӗн, хăйӗн социал-демократла партин ăстăнлăхӗпе активлăхӗ таран çӗкленме пултарат̦, тесе шухăшлани вăл—маниловщинă, хвостисăм пулнă пулӗччӗ. Капиталисăм вăхăтӗнче профеççилӗ организаци те пулин (вăл—ансатрах, кайа йулнисен сийӗсемшӗн ăнланса илме çăмăлтарах организаци) рабочи класа пӗтӗмӗшпе тенӗ пекех йе пӗтӗмӗшпех пӗрлештерсе тăма пултарайманни пирки ку таранччен пӗр ăстăнлă социал-демократ та иккӗленсе тăман. Хамăра хамăр улталани анчах, хамăр задачăсем ытла та пысăккине курасшăн мар пулни, çав задачăсене пӗчӗклетсе лартни—малти отрйадпа ун çумне туртăнакан пӗтӗм массăсем хушшинчи уйрăмлăха манни, малти отрйад нумайрах та нумайрах сарлака сийсене йаланах малтин çӳлӗшӗ таран **çӗклесе пыма** тивӗçлине манни пулнă пулӗччӗ" (**Ленин**, т. VI, стр. 205—206).

2) Парти вăл рабочи класăн малта пыракан, ăстăнлă отрйачӗ кăна мар, вăл тата, çавăнпа пӗрлех,—рабочи класăн **организациленнӗ** отрйачӗ, унăн хăйӗн дисциплини пур, вăл дисциплинă унăн членӗсемшӗн пуриншӗн те обйазател̦нă пулса тăрат̦. Çавăнпа та парти членӗсем парти организацийӗсенчен пӗринче обйазател̦нă членра тăмала. Парти класăн **организациленнӗ** отрйачӗ мар, **организацисен системи** мар, çынсен простой сумми, хăйсене парти членӗ тесе калакансен, анчах партин организацийӗсенчен пӗринче тăман, çапла вара, **организациленмен** çынсен сумми пулат̦ пулсан,—апла пулсан, вӗсем парти решенисене пăхăнмасан та пултараççӗ,—вара партин нихăçан та пӗрлӗхлӗ ирӗк пулмӗччӗ, вăл нихăçан та хăйӗн членӗсен ӗçӗсен пӗрлӗхне тума пултарайман пулӗччӗ,—çапла вара, вăл рабочи класăн кӗрешӗвне йертсе пыма пултарайман пулӗччӗ. Партин членӗсем пурте пӗр пӗрлӗхлӗ отрйада ирӗк пӗрлӗхӗпе, ӗçсен пӗрлӗхӗпе, дисциплинă пӗрлӗхӗпе пӗтӗçсе **организациленнӗ** пулсан анчах, парти рабочи класăн кӗрешӗвне практикăлăн йертсе пыма, ăна пӗр тӗллев патне илсе пыма пултарат̦.

Апла пулсан, интеллигентсем нумайӗшӗ, калăпăр, профессăрсем, студентсем, гимназиссем т. ыт. те парти тулашӗнче тăрса йулаççӗ, мӗншӗн тесен вӗсем йе парти дисциплинине пусмăр вырăнне хунă пирки, йе, Плеханăв II-мӗш сйесра каланă пек, „вырăнти вăл йе ку организацине кӗлине хăйсемшӗн мăшкăл" тесе шутланă пирки, партин вăл йе ку организацине кӗрессӗшӗн мар, тесе мен̦шевиксем хирӗçлени мен̦шевиксене хăйсенех пырса çапат̦, мӗншӗн тесен партине парти дисциплинине пусмăр тесе шутлакан тата парти организацине кӗме хăраса тăракан членсем кирлӗ мар. Рабочисем дисциплинăпа организацирен хăраса тăмаççӗ, вӗсем парти членӗ пулма шухăш тытсан, унта хавасланса кӗреççӗ. Дисциплинăпа организацирен индивидуалисла шухăш-кăмăллă интеллигентсем хăраççӗ, вӗсем чăнахах та парти тулашӗнче тăрса йулӗç. Анчах çакă лайăх та ӗнтӗ, мӗншӗн тесен парти çирӗп мар елементсем кӗрсе тулассинчен хăтăлат̦, çак елементсем кӗрсе туласси пуринчен ытла халӗ, буржуалă-демократилӗ револ̦уци çӗкленӗвӗ пуçланнă тапхăрта вăйланчӗ.

„Епӗ парти вăл **организацисен сумми** (тата ахал̦ арифметикăлă суммă та мар, комплекс) пулмала тетӗп пулсан, вара... çапла каланипе епӗ хамăн шухăша, хамăн требованине пит те уççăн, тӗрӗс палăртатăп, парти, класăн малти отрйачӗ пулса, мӗн май килнӗ таран **организациленнӗ** пултăр, парти хăйӗн ăшне **организацилӗхӗн минимумне те пулин йышăнакан** елементсене кăна илмеле пултăр, тетӗп..." (**Ленин**, т. VI, стр. 203).

Малала тата:

„**Сăмахпа** Мартăв формулӗ пролетариатăн сарлака сийӗсен интересӗсене сыхласа тăрат̦; **ӗçре** çак формулă пролетарилӗ дисциплинăпа организацирен хăракан **буржуалă интеллигентсен** интересӗсем майлă пулат̦. **Интеллигенци**, хал̦хи капиталисла общӗствăсен **уйрăм сийӗ** пулса тăраканскер, пӗтӗмӗшпе илсен, **шăпах индивидуалисăмпа**, дисциплинă тытма тата организациленме пултарайманнипе палăрса тăнине тунма никам та пултараймаст̦" (çавăнтах, стр. 212).

Малали 3-мӗш страницăра

М А Л А Л И.

Татах та:

„Пролетариат организаципе дисциплинӑран хӑрамаст̆... Организацине кӗресшӗн мар пулнӑ господа профессӑрсемпе гимназиссене, организаци контроље туса пынипе ӗҫленӗшӗн парти членӗ тесе йышӑнассишӗн пролетариат хыпса ҫунмаст̆... Пролетариатӑн мар, пирӗн партири **хӑшпӗр интеллигентсен** хӑйсен организацине дисциплинӑна вӗренсе пырасси ҫитмест“ (ҫавӑнтах, стр. 307).

3) Парти вӑл—ахаљ организациленнӗ отрйад анчах мар, вӑл рабочи класӑн ытти мӗнпур организацийӗсем хушшинчи **„организацин аслӑ форми“** пулса тӑрат̆, вӑл рабочи класӑн ытти мӗнпур организацийӗсене **йертсе пымала**. Организацин аслӑ форми пулса тӑракан, класӑн чи лайӑх, малта тӑракан теорипе, клас кӗрешӗвӗн саккунӗсене пӗлнипе тата револљуцилӗ йухӑмӑн опычӗпе хӗҫпӑшалланнӑ ҫыннисенчен тӑракан партин рабочи класӑн ытти мӗнпур организацийӗсене йертсе пыма пур майсем те пур, йертсе пымала та. Мењшевиксем партин йертсе пырас рољне хакламанни тата ӑна пӗчӗклетсе лартма тӑрӑшни вӑл пролетариатӑн парти йертсе пыракан ытти мӗнпур организацийӗсене вӑйсӑрлатасси патне,—ҫапла вара—пролетариата вӑйсӑрлатасси тата хӗҫпӑшалсӑрлатасси патне илсе пырат̆, мӗншӗн тесен, „пролетариатӑн влаҫшӑн кӗрешме организацирен пуҫне урӑх нимӗнле хӗҫпӑшал та ҫук“ (**Ленин**, т. VI, стр. 328).

4) Парти вӑл—рабочи класӑн малта пыракан отрйачӗ **рабочи класӑн миллионлӑ массисемпе ҫыхӑнса тӑрассине пӗтӗҫтерни** пулат̆. Парти малта пыракан темӗнле лайӑх отрйад пулсан та, ӑна темӗнле лайӑх организациленӗ пулсан та, вӑл ҫапах та партире тӑман массӑсемпе ҫыхӑнса тӑмасӑр, вӑл ҫыхӑнусене нумайлатса пымасӑр, вӑл ҫыхӑнусене ҫирӗплетмесӗр пурӑнма тата вӑйланма пултараймаст̆. Хӑйӗн ӑшне питӗрӗнсе ларнӑ, массӑсенчен уйӑрӑлса кайнӑ, хӑйӗн класӗпе ҫыхӑнса тӑнине ҫухатнӑ йе тата вӑйсӑрлатнӑ парти,—массӑсем шанса, пулӑшса тӑрассине ҫухатма тивӗҫ,—ҫапла вара—пурпӗрех пӗтсе ларма тивӗҫ. Тулли пурӑнӑҫпа пурӑнас тата вӑйланса пырас тесен, парти массӑсемпе ҫыхӑнса тӑрассине нумайлатмала тата хӑйӗн класӗн миллионлӑ массисем умӗнче шанӑҫ илмеле.

„Социал-демократилӗ **парти** пулас тесен, тенӗ Ленин, шӑпах **клас пулӑшуне** илме тӑрӑшмала“ (**Ленин**, т. **VI**, стр. 208).

5) Тӗрӗс ӗҫлесе пырас тата массӑсене тивӗҫлипе йертсе пырас тесен, партине **централисӑм** никӗсӗ ҫинче организацилемеле, унӑн пӗр устав, партилӗ пӗр дисциплинӑ пулмала, унӑн пуҫӗнче пӗр йертсе пыракан оргӑн—партин сйесӗ, сйессем хушшинче—партин Тӗп Комитечӗ тӑмала, сахалтарахӑшӗ нумайтарахӑшне пӑхӑнни, уйрӑм организацисем—центра, айалти организацисем ҫӳлти организацисене пӑхӑнни пулмала. Ҫак условисемсӗр рабочи класӑн партийӗ чӑн-чӑн парти пулма пултараймаст̆, класа йертсе пырас тӗлӗшри хӑйӗн задачине пурнӑҫа кӗртме пултараймаст̆.

Паллах, патша самодержавийӗн условийӗсенче парти вӑрттӑн ӗҫлесе пурӑннине пула, парти организацийӗсем вӑл вӑхӑтсенче айалтан суйлас никӗс ҫинче тытӑнса тӑма пултарайман, ҫавна пула парти пит те вӑрттӑн ӗҫлемеле пулнӑ. Анчах Ленин ҫапла шутланӑ: пирӗн парти пурнӑҫӗнчи ҫак **вӑхӑтлӑх** йапала патша йӗркине пӗтернӗ хыҫҫӑн малтанхи кунсенченех пӗтет, ун чухне парти уҫҫӑн, легаљнӑ ӗҫлекен тата парти организацийӗсем демократилӗ суйлавсен никӗсӗ ҫинче, **демократилӗ централисӑм** никӗсӗ ҫинче тытӑнса тӑракан пулаҫҫӗ.

„Малтанах, тесе ҫырнӑ Ленин, пирӗн парти ф рмаљнӑ пӗрпӗтӗме пӗрлешнӗ организаци пулман, вӑл уйрӑм группӑсен сумми кӑна пулнӑ, ҫавӑнпа та ҫак группӑсем хушшинче идейӑлӑ ҫыхӑнса ӗҫленисӗр пуҫне урӑх нимӗнле ҫыхӑну та пулма пултарайман. Халӗ ӗнтӗ епӗр организациленнӗ парти пулса тӑтӑмӑр, ҫак вӑл влаҫ туса хунине, идейӑсен авторитетне влаҫ авторитечӗ туса хунине, партин айалти инстанцисем ҫӳлтисене пӑхӑнмала тунине пӗлтерет те ӗнтӗ“ (Ленин, т. VI, стр. 291).

Мењшевиксене организацилӗ нигилисӑмшӑн тата партин влаҫӗпе унӑн дисциплинине йышӑнман улпутла анархисӑмшӑн айӑпласа, Ленин ҫапла ҫырнӑ:

„Вырӑс нигилисӗн ҫак улпутла анархисӑм уйрӑманах нумай. Парти организацийӗ уншӑн темӗнле тискер „хапрӑк“ пек туйӑнат̆, пайӗ пӗтӗмӗшне, сахалтарахӑшӗ нумайтарахӑшне пӑхӑнни уншӑн „крепостной йӗркене кӗртсе ӳкерни“ пек туйӑнат̆... ӗҫе центр йертсе пынипе валеҫсе ӗҫлемеле туни ҫинчен вӑл: ҫынсенчен „пӗчӗк кустӑрмасемпе винтӑсем“ туса хураттӑр тесе, трагикомедилле ҫухӑрат̆ (ҫитменнине, редактӑрсенчен сотрудниксем туса хуни вӗсемшӗн вилӗмлӗнех курӑннӑ пек шутланат̆), партин организацилӗ уставӗ ҫинчен асӑнни ӑна йӗрӗнтерет тата („формалиссем“ ҫине) сиввӗн пӑхса—уставсӑрах та йурамалаччӗ, тесе калаттарат̆“ (ҫавӑнтах, стр. 310).

6) Парти, вӑл хӑйӗн ӗретӗнче **пӗрлӗхе** упраса хӑварас тет пулсан, хӑйӗн ӗҫӗнче пролетарилӗ **пӗр** дисциплинӑна тытса пымала, вӑл дисциплинӑ партин пур членӗсемшӗн те—лидӗрсемшӗн те, ҫавӑн пекех рйадовой членсемшӗн те **пӗр пекех** обйазатељнӑ пулмала. Ҫавӑнпа та партире „суйласа илнисем“ тесе,—вӗсемшӗн дисциплинӑ обйазатељнӑ мар,—тата „суйласа илменнисем“ тесе,—вӗсем дисциплинӑна пӑхӑнса тӑма тивӗҫлӗ, уйӑрни пулмала мар. Ҫак условисӗр партин пӗрпӗтӗмлӗхне тата унӑн речӗсен пӗрлӗхне сыхласа хӑварма ҫук.

„Сйес суйласа лартнӑ редакцине хирӗҫ Мартӑвпа компанин **аслӑ** сӑлтавсем пачах та ҫукки, тесе ҫырнӑ Ленин, вӗсен хӑйсен сӑмахӗнченех: „епӗр крепостнойсем мар!“ тенинченех пит лайӑх курӑнат̆. Хӑйне „суйласа илнӗ чунсен“, массӑлӑ организаципе массӑлӑ дисциплинӑран ҫӳлте тӑраканнисен хисепне кӗртекен буржуалӑ интеллигентӑн психологийӗ кунта питех те уҫҫӑн тухса тӑрат̆. Интеллигентла индивидуалисӑма... кирек мӗнле пролетарилӗ организаципе дисциплинӑ та **крепостной** права пек туйӑнат̆“ (Ленин, т.VI, стр. 282).

Малала тата:

„Пирте чӑн-чӑн парти пулса пынӑ май, ӑстӑнлӑ рабочи пролетарилӗ ҫарти салтакӑн психологине анархисла фразӑсемпе вӗҫкӗнленекен буржуалӑ интеллигентӑн психологийӗнчен уйӑрса илме вӗренсе ҫитмеле, рйадовойсенчен анчах мар, тата „ҫӳлти ҫынсенчен“ те парти членӗн обйазаннӑҫӗсене пурнӑҫа кӗртме **ыйтма** вӗренсе ҫитмеле“ (ҫавӑнтах, стр. 312).

Разногласисене тӗпчесе тухнин итогӗсене туса тата мењшевиксен позицине „организацилӗ ыйтусенчи оппортунисӑм“ тесе палӑртса парса, Ленин ҫапла шутланӑ: мењшевисӑмӑн тӗп ҫылӑхӗсенчен пӗри вӑл—парти **организацине**, пролетариатӑн хӑйне ирӗке кӑларассишӗн кӗрешес ӗҫри хӗҫпӑшалне, хакламанни пулат̆, тенӗ. Мењшевиксем—пролетариатӑн парти **организацийӗ** револљуци ҫӗнтерӗвӗшӗн пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулса тӑмаст̆, тесе шутланӑ. Ленин, мењшевиксенчен уйрӑмах, ҫапла шутланӑ: пролетариат **идейӑ** тӗлӗшпе ҫеҫ пӗрлешни ҫӗнтерӳ тума **ҫителӗксӗр**,—ҫӗнтерес тесен, пролетариатӑн идейӑлӑ пӗрлӗхне „организацин материаллӑ пӗрлӗхӗпе“ **„ҫирӗплетсе хумала“**. Ҫак услови пулсан ҫеҫ пролетариат никам ҫӗнейми вӑй пулса тӑма пултарат̆“, тесе шутланӑ Ленин.

„Пролетариатӑн, тесе ҫырнӑ Ленин, влаҫшӑн кӗрешме организацирен пуҫне урӑх нимӗнле хӑҫпӑшал та ҫук. Буржуалӑ тӗнчере анархилӗ конкуренци пуҫпулса тӑнӑ пирки уйӑрӑлса пурӑнакан, капиталшӑн ирӗксӗр ӗҫлесе пусмӑрта пурӑнакан, пӗтӗмпех ҫуклӑхӑн, тискерлӗхӗн, пӗтеслӗхӗн „тӗпсӗр шӑтӑкне“ пӗрмайах кӑларса ывӑтнине тӳссе пурӑнакан пролетариат хӑй марксисӑмӑн принципӗсемпе идейӑлӑ пӗрлешсе тӑнине ӗҫхалӑхӗн миллионӗсене рабочи клас ҫарне пӗрлештерекен организацин материаллӑ пӗрлӗхӗпе ҫирӗплетсен ҫеҫ никам ҫӗнейми вӑй пулса тӑма пултарат̆, тата пурпӗрех пулса тӑрат̆ те. Ҫак ҫар умӗнче вара вырӑс самодержавийӗн хӑрса кайнӑ влаҫӗ те, тӗнчери капиталӑн хӑрса пыракан влаҫӗ те тытӑнса тӑраймӗ“ (ҫавӑнтах, стр. 328).

Ҫакӑн пек малала мӗн пулассине витӗр курса ҫырнӑ сӑмахсемпе пӗтерет Ленин хӑйӗн кӗнекине.

Ҫавӑн пек ӗнтӗ Ленин хӑйӗн „Шаг вперед, два шага назад“ йатлӑ чаплӑ кӗнекинче тарӑнӑн ҫутатса ҫырнӑ организацилӗ тӗп положенисем.

Ҫак кӗнекен пӗлтерӗшӗ нимрен малтан вӑл кружковщинӑна хирӗҫ тӑрса партилӗхе тата йӗркесӗрлӗх кӳрекенсене хирӗҫ тӑрса партине сыхласа хӑварнинче, организацилӗ ыйтусем тӗлӗшпе мењшевикла оппортунисӑма ҫапса ҫӗмӗрнинче тата бољшевикла партин организацилӗ никӗсӗсене хывнинче пулат̆.

Анчах унӑн пӗлтерӗшӗ ҫакӑнпах пӗтмест-ха. Унӑн историлӗ пӗлтерӗшӗ—вӑл кӗнекере Ленин марксисӑмӑн историнче пирвайхи хут пролетариатӑн йертсе пыракан **организацийӗ**, пролетариат аллинче тӗп хӗҫпӑшал пулса тӑракан **парти ҫинчен калакан вӗрентӗве** ҫырса панинче, ҫав пролетариат аллинчи хӗҫпӑшалсӑр пролетарилӗ диктатурӑшӑн кӗрешес ӗҫре ҫӗнтерме ҫук.

Ленинӑн „Шаг вперед, два шага назад“ кӗнеки парти работникӗсем хушшинче саланни вырӑнти организацисем нумайӗшӗ Ленин тавра пӗтӗҫесси патне илсе пынӑ.

Анчах, организацисем бољшевиксем тавра мӗн чухлӗ таҫӑрах пӗтӗҫсе пынӑ, ҫавӑн чухлӗ мењшевиксен лидӗрӗсем хӑйсене хӑйсем хӑйарларах тыткаланӑ.

1904 ҫулта ҫула, Плеханӑв пулӑшнине тата пӑсӑлса кайнӑ икӗ бољшевик, Красинпа Носков, сутӑннине пула, мењшевиксем Тӗпкомра нумайтарахӑш пайӗ пулса тӑнӑ. Мењшевиксем ӗҫе раскол патне илсе пыни уҫҫӑнах курӑннӑ. „Искра“-на тата Тӗпкома ҫухатни бољшевиксене йӑвӑр лару-тӑрӑва кӗртсе йанӑ. Вӗсен хӑйсен бољшевикла хаҫат организацилемеле пулнӑ. Партин ҫӗнӗ Тӗпкомне тума тата мењшевиксене пӗтерсе хума ҫӗнӗ, партин III-мӗш сйесне организацилемеле пулнӑ.

Ҫак ӗҫе Ленин тытӑннӑ, бољшевиксем тытӑннӑ.

Бољшевиксем партин III-мӗш сйесне пухассишӗн кӗрешӳ пуҫарса йанӑ. 1904 ҫулти августра Швейцарире Ленин йертсе пынипе 22 бољшевиксен совешчанийӗ пулсе иртнӗ. Ҫав совешчани „Парти патне“ чӗнсе калани ҫырса йышӑннӑ, вӑл чӗнсе калани бољшевиксемшӗн III-мӗш сйеса пухассишӗн кӗрешмели программӑ пулса тӑнӑ.

Бољшевикла комитетсен виҫӗ облӑҫри конференцийӗсене (Кӑнтӑр, Кавказ тата Ҫурҫӗр) нумайтарахӑш Комитечӗсен Бӳроне (Бюро комитетов большинства) суйланӑ, вал Бӳро партин III-мӗш сйесне хатӗрлессине ӗҫре пурнӑҫа кӗртме тытӑннӑ.

1905 ҫулти йанварӗн 4-мӗшӗнче «Вперед» йатлӑ бољшевикла хаҫатӑн пӗрремӗш номӗрӗ тухнӑ.

Ҫапла вара, партире хӑйне уйрӑм икӗ фракци, бољшевиксен тата мењшевиксен фракцийӗсем пулса тӑнӑ, вӗсен хӑйсен центрӗсем, хӑйсен пичет оргӑнӗсем пулнӑ.

КӖСКЕ ВЫВӐДСЕМ

1901-1904 ҫулсен тапхӑрӗнче рабочисен револљуцилӗ йухӑмӗ ӳснӗ никӗс ҫинче Российйӑри марксисла социал-демократла организацисем ӳссе ҫирӗпленеҫҫӗ. «Економиссене» хирӗҫ ҫине тӑрса туса пынӑ принциплӑ кӗрешӳре ленинла «Искра»-н револљуцилӗ ҫулйӗрӗ ҫӗнтерет, идейӑлӑ сапӑнчӑклӑх тата «кустарничӗствӑ» пӗтсе пыраҫҫӗ.

«Искра» социал-демократла сапаланчӑк кружоксемпе группӑсене пӗр-пӗринпе ҫыхӑнтарат̆ те партин II-мӗш сйесне хатӗрлет. 1903 ҫулта II-мӗш сйесра Российйӑри социал-демократла рабочи парти организациленнӗ, парти программине, уставне йышӑннӑ, партин тӗпри йертсе пыракан оргӑнӗсене туса хунӑ.

II-мӗш сйесра, «Искра» ҫулйӗрӗ тытӑклӑнах ҫӗнтерессишӗн пынӑ кӗрешӳре РСДРП ӑшӗнче икӗ группӑ пуҫланса кайат̆. Бољшевиксен группи тата мењшевиксен группи.

II-мӗш сйес хыҫҫӑн бољшевиксемпе мењшевиксем хушшинчи тӗп разногласисем организацилӗ ыйтусем тӑрӑх пулса пыраҫҫӗ.

Мењшевиксем «економиссемпе» ҫывхараҫҫӗ те парти ӑшӗнче вӗсен вырӑнне йышӑнаҫҫӗ. Мењшевиксен оппортунисӑмӗ халлӗхе организацилӗ ыйтусенче палӑрат̆. Мењшевиксем ленинла сӑнарлӑ револљуцилӗ паттӑр партине хирӗҫ. Вӗсем ҫирӗп мар, организациленмен, хӳрере пыракан партишӗн. Вӗсем партире раскол тӑвас ҫулйӗре тытса пыраҫҫӗ. Плеханӑв пулӑшнипе вӗсем «Искра»-па Тӗпкома хӑйсен аллине ҫавӑрса илеҫҫӗ, ҫак центрсемпе вӗсем расколљникла ӗҫсем тума усӑ кураҫҫӗ.

Мењшевиксем йенчен раскол тӑвас хӑрушлӑх пуррине курса, бољшевиксем расколљниксене ҫаварлӑхлас ӗҫсене тӑваҫҫӗ, вырӑнсенчи организацисене III-мӗш сйеса пухма мобилизацилеҫҫӗ, хӑйсен «Вперед» йатлӑ хаҫатне кӑларса тӑраҫҫӗ.

Ҫапла вара, вырӑссен пӗрремӗш револљуцийӗ умӗн, Российйӑпа Йапони хушшинчи вӑрҫӑ пуҫланнӑ тапхӑрта бољшевиксемпе мењшевиксем пӗр-пӗринчен уйрӑм политикӑлӑ группӑсем пулса тӑраҫҫӗ.

(ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсӗн малали „Чӑваш Коммунӗ“ хаҫатӑн ҫитес номӗрӗсенче пичетленет).

Буржуалӑ националис Григорйӗв ҫинчен

Иртнӗ кунсенче Шупашкарти пропагандиссен шкулӗнче коммунисӗн пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пуху ПСК(б) Парти Чӑваш организацин XIX-мӗш конференцийӗ йышӑннӑ решенисене сӳтсе-йаврӗ.

Докладчик Фролов йулташ конференцире Дубӑв йулташ тунӑ доклада кӗскен каласа пачӗ. Вӑл конференцире пулнӑ вӑйлӑ критикӑпа самокритикӑна ҫутатса памарӗ. Пренире тухса калакансем те малтанах докладчикрен малала кайаймарӗҫ Партком ҫекретарӗ Черенков й. 30 минут хушши каласрӗ, анчах шкулри сӑтӑрла ӗҫсен йулашкисене пӗтерес пирки чарӑнса тӑмарӗ. Каҫал пропагандиссен шкулӗнче 3 уйӑхлӑх курс урлӑ 70 пропагандиса вӗрентсе кӑлармала пулнӑ. Ку курса пухман та. Партком партилӗ-политикӑлӑ ӗҫе вӗренӳ ӗҫӗпе ҫыхӑнтарса пыма тӑрӑшмаст̆. Шкулта вӗренекенсем тӗне хирӗҫ ыйтусемпе лекцисем иртерме ыйтнине партком ӗҫе кӗртмест.

Черенков йулташ парти вӗрентӗвӗ ҫинчен нумай каласма йуратат̆, ҫав вӑхӑтрах вӑл парти вӗренӳвӗн кунӗсенче пухусем, канашлусем иртерет. Черенков йулташ хӑйӗн вӑрӑм сӑмахӗнче уйрӑм коммунисен йӑнӑшӗсене те критиклемерӗ. Мӗншӗн тесен вӑл хӑй те таса коммунисах мар. Вӑл Улатӑрти хула советӗнче Елле тӑшманпа пӗрле чылай вӑхӑт хушши ӗҫлесе пурӑннӑ. Вӑл хӑйне критиклесрен хӑрасах пулмала, уйрӑм коммунисен партине йурӑхсӑр ӗҫӗсене витсе тӑма пӑхнӑ. Ку вӑл пухура та уҫҫӑнах палӑрчӗ. Акӑ, ӗҫке супнӑ, парти дисциплинине пӑхӑнмасӑр пӑсӑлса кайнӑ Финогенӑв коммунисӑн партине йурахсӑр ӗҫне сӳтсе-йавмасӑр темиҫе уйӑх хушши тытса тӑрат̆. Вӑл ҫавӑн пекех буржуалӑ националиссен обшчӗствинче активлӑ ӗҫленӗ Григорйӗв ҫинчен те ку таранччен сӳтсе-йавмасӑр тытса тӑнӑ.

М. Г. Григорйӗв 1930 ҫулта совпартшкулра преподаватель пулса ӗҫленӗ вӑхӑтрах „Общество по изучению местного края“ йатла буржуалӑ националиссен ошчӗствине кӗнӗ. 1931 ҫултан пуҫласа буржуалӑ националиссен тӗп совечӗн оргбӳро членӗ пулса ӗҫленӗ. Буржуалӑ националиссен пӗрремӗш сйесӗнче (1932 ҫ.) Григорйӗва тӗп совет президиум членне суйланӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн палла ӗнтӗ, Григорйӗв ку контрреволљуцилӗ обшчӗствӑра активлӑ член пулнӑ ҫеҫ мар, вӑл ку обшчӗствӑна организацилекенсенчен пӗри пулнӑ. Вӑл пухусем организациленӗ, ирӗклӗ тӑмали обшчӗства йачӗпе витӗнсе тӑшманла елементсене пухнӑ.

Григорйӗв буржуалӑ-националиссен обшчӗствин активлӑ членӗсене пӗлсе тӑнӑ пулсан та, йулашки вӑхӑтченех ку тӑшмансене тӑрӑ шыв ҫине кӑларман, вӑл вӗсене ним шарламасӑр витсе, партине улталаса пурӑннӑ. Вӑл оргбӳро ларӑвӗсенче пулса, уйрӑм протоколсем ала пуснӑ пулсан та: „Астумастӑп, пӗлместӗп, епӗ активлӑ член пулман“, тесе сӳпӗлтетет. Григорйӗв хӑй пухусем организациленине „астумаст̆“. Чейе Григорйӗв тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ халӑх тӑшманӗсене ҫеҫ астӑват̆, ҫайан кунччченех парти ретӗнче пытанса йулнӑ буржуалӑ националиссене астумаст̆. Мӗншӗн тесен, Григорйӗва двурушник-предатӗл Г. И. Иванов витсе тӑнӑ. Иванов буржуалӑ националиссен обшчӗствинче тӑнине пытарнӑшӑн тата буржуалӑ националиссене тӑрӑ шыв ҫине кӑларма тӑрӑшманшӑн Григорйӗва парти Обкомӗ ҫумӗнчи пуҫламӗш парторганизаци хытӑ йатланипе килӗшмесӗр, ку ыйтӑва хула комитет бӳровӗнче лартса пуҫламӗш парторганизаци йышӑннӑ решенине пӑрахӑҫа кӑларнӑ. „Григорйӗва парти Обкомӗн шкулсен пайӗн пуҫлӑхӗнчен кӑларнипе ӗҫе пӗтермеле, ӑна урӑх айӑплама кирлӗ мар,“ тенӗ Иванов. ПСК(б)П хула комитет бӳровӗнче те ҫаплах йышӑннӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн Григорйӗв „тап-таса“ коммунис пулса йулнӑ.

Григорйӗв Вӑрмарта райком ҫекретарӗ пулса ӗҫленӗ вӑхӑтра та партине йурӑхсӑр ӗҫсем тунӑ. Кадрсене вӗрентсе ҫитӗнтерес вырӑнне, вӗсене администрациленӗ. 1937 ҫулта 27 колхоз предҫедатӗлне тата 13 йалсовет предҫедатӗлне ӗҫрен кӑларнӑ. Район центрӗнче совет аппаратӗнчи тӑшманла елементсене хирӗҫ кӗрешсе пыман. Вӑл йӑла тӗлӗшӗнчен те пӑсӑлса кайнӑ ҫын. Вӑл хӑйӗн арӑмӗ пур ҫинчех И. хӗрарӑмпа ҫыхланса кайнӑ. Ҫак ӗҫсем ҫинчен Григорйӗв йулашки вӑхӑтченех партирен пытарса пурӑннӑ.

ПСК(б)П хула комитет бӳровӗ августӑн 21-мӗшӗнче Григорйӗва хытӑ йатласа асӑрхаттармала тунӑ. Анчах ку решенипе нийепле те килӗшме ҫук. Пуҫламӗш парторганизацин кӗске вӑхӑтрах Григорйӗвӑн партилӗхӗ ҫинчен сӳтсейавса, татӑклӑ решени йышӑнмала.

П. Перлов.

Й. Виктӑрӑв

Пӗтӗм тӗнчери лару-тӑрӑва пӑхса тухни

Мӳнхӗнре тунӑ килӗшӳ ӗҫе кӗчӗ—Чехословакине татса валеҫме пуҫларӗҫ. Халиччен курман предатӗлствӑ хыҫҫӑн халиччен курман тата нимӗнпе те витсе тӑман ҫарату пуҫланчӗ. Ҫӗршыва пайӑн-пайӑн татса валеҫеҫҫӗ. Килӗшӳ тӑрӑх хӑш облӑҫа оккупаци тума йуранине, хӑш облӑҫа йураманнине пӑхмасӑрах, Германи фашисӗсем кунсеренех пӗр облӑҫ хыҫҫӑн теприне, пӗр район хыҫҫӑн тепӗр районне йышӑнаҫҫӗ. Тӗрӗссипе илсен, Мӳнхӗнри килӗшӗве пӑснӑ ӗнтӗ, мӗншӗн тесен, „пӗтӗм тӗнчери комиҫҫи“ тесе калакан комиҫҫи пилленипе захватчиксем Мӳнхӗнри килӗшӳре кӑтартса пынӑ тӑватӑ зонӑсӑр пуҫне 5-ш зонӑри чылай районсене те ҫарпа йышӑнса илчӗҫ.

Берлинра лару туса иртерекен „пӗтӗм тӗнчери комиҫҫин“ ӗҫӗ хӑйӗн характӗрӗпе „тӑватӑ ҫӗршывӑн Мӳнхӗнри канашлӑвӗн“ ӗҫне аса илтерет: решенисене агрессӑр хушнӑ тӑрӑх йышӑнаҫҫӗ, Чехословаки представителӗсене ыйтусем сӳтсе-йавнӑ ҫӗре йамаҫҫӗ те, вӗсем, Чехословаки представителӗсем, ҫав ыйтусемпе пит ҫывӑх интересленеҫҫӗ.

Германи фашисӗсем Чехословаки ҫӗршывне таткаласа пӗтерессишӗн, чи шултра промышлӗннӑҫлӑ центрсене туртса илесшӗн мӗнпур вӑйсемпе тӑрӑшаҫҫӗ. Пољшӑпа Венгри захватчикӗсем те Германи фашисӗсем пекех тимлӗн ӗҫлеҫҫӗ. Кунта та каллех Мӳнхӗнри килӗшӗве пӑсаҫҫӗ. вӑл килӗшӳре Венгрипе Пољшӑ ыйтӑвӗсене 3—4 уйӑх хушшинче калаҫса татса пама палӑртнӑ пулнӑ. Нимӗнле калаҫусем те пулман. Пољшӑ уљтиматум тӑратрӗ те, ҫавӑн хыҫҫӑн Тешин Силезинчи районсене васкасах ҫарсемпе йышӑнчӗ. Намӑссӑрланас тӗлӗшпе Германи агрессӑрӗсенчен йулас мар тесе, Пољшӑ захватчикӗсем чех халӑхӗ 70 процента ҫитекен хуласене те оккупаци тӑваҫҫӗ. Пољшӑ хыҫҫӑн Венгри пырат̆, вӑл Чехословакинчен Словакипе Закарпат Украинине уйӑрса илесшӗн. Ҫӗршыва тулаҫҫӗ, касса ваклаҫҫӗ, Чехословаки хӑйне тӗллӗн государствӑ пулса пурӑнассине пӗтерсе лартмалли условисем туса хураҫҫӗ.

Ҫӗршывра хӑйӗнче те реакци пуҫне ҫӗклерӗ. Годжа, Прейс тата Германи фашисӑмӗн ытти агӗнчӗсем те ҫӗршывра демократилӗ стройа хирӗҫ анлӑ поход сарса йама ҫине тӑрсах тӑрӑшаҫҫӗ. Бенеш президент отставкӑна тухнийех Чехословакйре кам хуҫаланнине кӑтартса пачӗ, Мӳнхӗнри килӗшӳн Англипе Франциири автӑрӗсем: Чехословаки никама пӑхӑнмасӑр ирӗклӗн пурӑнассине гарантилеҫҫӗ, тесе ӗнентерни йепле суйа пулнине кӑтартса пачӗ. Халь ӗнтӗ пуриншӗн те палла: Бенеша отставкӑна тухма Гитлӗр ыйтнӑ тата унӑн ҫав требованине ҫырлахтарма Англипе Франци килӗшӳ пана. Мӳнхӗнри килӗшӳ хыҫҫӑн та предатӗлствӑ чарӑнман.

* * *

Кайран ӳпкелешни ним те памаст̆, теҫҫӗ. Анчах халь ҫеҫ сарӑлса кайнӑ событисенчен хӑшпӗр уроксем тӑвас пулат̆. Англин политикӑлӑ палла дейатӗлӗ, консерватӑр Уинстон Черчиљ „Дейли телеграф энд Морнинг пост“ хаҫатра пичетленсе тухнӑ статйара Чехословаки правитӗлстви Лондӑнпа Париж кӑмӑлне итлесе ӗҫленӗшӗн шеллет. Черчиљ Чехословаки правитӗлствине критикленине кӑшт тӗрӗс тесе те йышӑнмала. Ҫинерех тӑрса ӗҫлемеле пулнӑ. „Бенеш правитӗлстви,—тесе ҫырат̆ Черчиљ,—сентабӗрӗн 20-мӗшчен ӑна сӗннӗ условисене (кунта Англипе Франци планӗ ҫинчен калана) сирсе йанӑ пулсан тата Чехословаки ҫине фашисла Германи тапӑннӑ пулсан, Чехословаки хӑйуллӑнах хирӗҫ тӑнӑ пулсан, ҫак вара вӑл ӗҫе Францине хутшӑнтарнӑ пулӗччӗ, Англине—Францийе пулӑшма илсе пырӗччӗ“.

Черчиљ пӗр ӗҫе шута илмест пулмала: Чехословакире Англири пек мар, Англипе Францири государствӑ ҫыннисен тӳрӗлӗхӗ пирки мухтарах шухӑшлана пулма кирлӗ. Черчиљ ахаљрен хӑйӗн опычӗ пирки Бенеш президентпа каласса пӑхман.

Черчиљ ахаљрен мар тревогӑ ҫапат̆. Чемберленпа Даладйе тӳррӗмӗнех пулӑшнипе агрессӑрсен блокӗ вӑйланни мирлӗ пурнӑҫшӑн калама ҫук пысӑк хӑрушлӑх пулса тӑрат̆, ҫакна Англири буржуалӑ-политикӑлӑ дейатӗлсен пысӑк мар йышӗ лайӑх пӗлсе тӑрат̆, Черчиљ ҫавӑн пек дейатӗлсенчен пӗри ӗнтӗ, вӑл ҫав хӑрушлӑх ҫинчен уҫҫӑнах калат̆. Чӑнахах та, Чехословаки пӗр пӗччен ҫеҫ асапланакан ҫӗршыв пулса тӑрат̆-и вара? Францине иккӗмӗш вырӑнта тӑракан державӑсен картне антарса лартман-и вара? Пайантан пуҫласа Германи, хӑйӗн тылӗшӗн хӑрамасӑрах тата Чехословаки бастионӗсем ҫине тайӑнса (вӑл бастионсене Германине хирӗҫ кӗрешес тесе Франци хутшӑнса ӗҫленипе тунӑ), хӑйӗн штыкӗсемпе Франци ҫине тӗлleme пултарат̆. Мӳнхӗнри килӗшӳ вӑл агрессӑрсене панӑ парне, Франци хӑрушсӑрлӑхне ишӗлтерме, ӑна йӗри-тавра хупӑрласа илме, тӗнчерен уйӑрса илме тӑрӑшакан Германипе Италине панӑ парне пулса тӑрат̆.

Англине мӗнле усӑ пулчӗ-ха? Вӑл фашисла Германине Ҫывӑхри Хӗвелтухӑҫне кайма ҫул уҫса пачӗ. Телеграф ӗнтӗ халех ҫакӑн пек хыпар илсе кил[illegible]: Германи Дунай, Хура тинӗс, Турци, Ҫывӑхри Хӗвелтухӑҫ урлӑ [illegible] кайма ҫӗнӗ коммерчӗски ҫул [illegible]ма тӑрӑшат̆. Вӑтаҫӗр тинӗсӗпе Суецк каналне кайса ҫаварӑнмасӑрах йӳнеҫтерес тесе, Германи Рейн Майн Дунай каналне тӑвассине хӑвӑртлатрӗ.

* * *

Чӑн-чӑн пурнӑҫпа, кулленхи конкретлӑ фактсемпе тӗл пулсан Мӳнхӗнри килӗшӳ ҫинчен „миротворчӗствӑлӑ“ суйа пӗркенчӗк тӳрех сирпӗнсе кайрӗ, ҫав суйа пӗркенчӗкпе Англипе Франци империалисӗсем агрессӑрсемпе тупа хӑйсен каварлашуне, вӗсем умӗнче тунӑ хӑйсен капитуљацине витесшӗн пулнӑ. Мӳнхӗнри килӗшӳ агреҫҫине ҫӗнӗрен саралса кайма, ҫӗнӗрен йут ҫӗрсене туртса илессине хускатрӗ. Черетре Испани ыйтӑвӗ. Британири йут ҫӗршыв ӗҫӗсен министерствин архивӗнчен Испанири пӗр-пӗрин ҫине тӑшманла пӑхакан йенсене „перемири“ тумала плана туртса кӑларнӑ. Каллех „миротворчӗствӑлӑ“ демагогипе витӗнсе республикӑлӑ Испанине хирӗҫ ҫӗнӗ поход организацилеме хӑтланаҫҫӗ. Кунта вара Итали агрессӑрне пуҫран шӑласси ҫинчен сӑмах пырат̆. Муссолини Англи умне те, Франци умне те счот хыҫҫӑн счот тӑратат̆. Чемберленпа Гитлӗр хушшинче посредничӗствӑ вырӑнче ӗҫленӗшӗн Чемберлен ӑна Англипе Итали хушшинче тунӑ килӗшӗве ратификацилеме сӑмах панине Муссолини ҫирӗп астӑват̆.

Испани проблемине „татса пама“ палӑртакан план мӗнре тӑрат̆-ха? Кӗскен илсен вӑл акӑ мӗнре тӑрат̆: Испани территорине икке пайлама палӑртаҫҫӗ. Пӑлхавҫӑсем йышӑнса тӑракан территоринче монархилӗ режим туса хума палӑртаҫҫӗ. Республикӑлӑ Испанипе фашисла бандитсем хушшинче „перемири“ тумала.

Ҫак вӑл планӑн пӗтӗмӗшпе илнӗ содержанийӗ. Республикӑлӑ Испанине хирӗҫ тата урӑх мӗнле тискер ӗҫ тума хатӗрленнине Лондӑнри, Римри, Берлинри, ҫавӑн пекех тен Парижри те, дипломатилӗ канцељарисен ҫекретлӑ ӗҫӗсем каласа пама пултарӗччӗҫ. Анчах пӗр ҫак факт хӑйех ӗнтӗ империалиссем каллех йут ҫӗршывӑн кунҫулне унӑн халӑхӗнчен ыйтмасӑрах, унӑн правитӗлствинчен ыйтмасӑрах татса пама ӗмӗтленнӗ факт вӑл—вӗсем хатӗрлекен плансем мӗнле пулассине ӗнентерсе парат̆.

Империалиссем саккунлӑ правитӗлствӑна хирӗҫ восстани пуҫласа йанӑ пӑлхавҫӑсене саккунлӑ пурӑнма май туса парасшӑн тӑрӑшнӑ факт—ҫителӗклӗ кӑтартулӑ факт пулса тӑрат̆. Ҫӗнӗ план, агрессӑрсемпе ҫӗнӗ каварлашу туни—нимӗн те мар, интервенцине урӑх майсемпе малала туса пыни пулат̆, анчах вӑл интервенцине Германипе Итали ҫеҫ мар, тата Англипе Франци те хутшӑннипе туса пыни пулат̆.

* * *

Хӑйсен класлӑ интересӗсемшӗн, рабочи класа хирӗҫ, халӑх йухӑмне хирӗҫ кӗрешессишӗн, фашисӑма, ҫав реакци тӗрекне ҫӑлса хӑварассишӗн Англири влаҫа йертсе пыракан ҫынсемпе вӗсен Франциri тусӗсем хӑйсем йышӑннӑ пӗтӗм тӗнчери обйазатӗлствӑсене пӑсаҫҫӗ, пӗтӗм тӗнчери договӑрсене ҫура-ҫура таҫҫӗ, пӗчӗк тата вӑйсӑр ҫӗршывсене фашисла агрессӑрсен ҫӑварне пӑрахса параҫҫӗ, хӑйсен нацилӗ интересӗсемпе парне параҫҫӗ, Англи тата Франци халӑхӗсене сутаҫҫӗ.

Агреҫҫине хавхалантарса пыракан хӑйсен преступленилӗ политикине вӗсем мире хӳтлесси ҫинчен пуш сӑмахсемпе павранипе витсе тӑраҫҫӗ. Вӗсен суйисене пурнӑҫ кашни кун тата кашни сехетрех тӑра шыв ҫине кӑларса пырат̆. Мӳнхӗнри килӗшӳ нимӗнле вӑрҫӑна та сирсе йамарӗ, мӗншӗн тесен, Чехословаки ҫине Германи тапӑнас-мӗн пулсан Чехословакине хӳт-

(Йулашки 4-мӗш страницӑра)

Ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарас умĕн

Ăмăртса ĕçленипе кĕтсе илеççĕ

Кайри Каракри (Трак р.) Калинин йачĕпе тăракан колхоз çумĕнчи комсомол пуçламĕш организацийĕ комсомолăн йертсе пыракан оргăнĕсен суйлавне лайăх кĕтсе илме хатĕрленет. Комсомолĕцсем суйлав инструкцийĕпе тĕплĕн паллашрĕç.

Суйлава тата комсомол 20 çул тултарнă йубилейа хатĕрленнĕ май комсомолĕцсем социалисăмла ăмăртăва анлăн сарса йачĕç. Чăх-чĕп ферминче ĕçлекен Анна Илларионăвă чăх-чĕпсене пурне те сыва тата тутă çитĕнтерме илнĕ обйазатĕлствине ăнаçлăн пурнăçа кĕртсе пырать.

Комсомол организацийĕ сойузра тăман çамрăксем хушшинче массăла-политикăлă ĕçе аван йĕркеленĕ. Çакна май комсомолĕцсен йышĕ те ӳсрĕ. Иртнĕ çул колхозра виçĕ комсомолĕц çеçчĕ, халь 11 комсомолĕц.

Ф. Трофимăв.

Производствăра лайăх ĕçлеççĕ

ÇĔРПӲ. Кашаркасси йалсоветĕнчи Буденный йачĕпе тăракан колхозри комсомолĕцсем ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнине производствăра пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илеççĕ.

Буденный йачĕпе тăракан колхоз „Молот" колхозпа ăмăртса ĕçлет. Колхоз предçедателĕ комсомолĕц Меркурйĕв йулташ лайăх йертсе пынипе Буденный йачĕпе тăракан колхоз малти вырăна тухрĕ.

Уйри ĕçсенче лайăх ĕçлесе пынипе пĕрлех комсомолĕцсем Канаш—Шупашкар чукунçул строителĕствине те активлăн хутшăнчĕç. Комсомолĕцсем пуçарнипе чукунçул çинче ĕçлеме 40 çынран бригада организацилерĕç. Комсомолĕцсенчен çулйĕр ĕçĕнче уйрăмах Васçилйĕвă, Михайлăвă йулташсем лайăх ĕçлеççĕ.

Колхозри çамрăксенчен кăçал 10 çын комсомола кĕчĕç. Тата 7 çамрăк комсомола кĕме хатĕрленсе ПСÇЛКС программипе тата уставĕпе паллашаççĕ.

Халь комсомолĕцсем ПСК(б)П историн Кĕске курсне уйрăм сыпăксем тăрăх вуласа пырса, ăна тарăннăн вĕренме хатĕрленеççĕ.

А. Иванов.

Комсомол активĕн районри пухăвĕ

ЙĔПРЕÇ. Октăберĕн 10-мĕшĕнче комсомол активĕн районри пухăвĕ пулса иртрĕ.

Пуху икĕ ыйту сӳтсе-йаврĕ: ПСÇЛКС Тĕпкомĕн VI-мĕш пленумĕпе Чăваш Обкомĕн IV-мĕш пленумĕн итогĕсем çинчен тата комсомол райкомĕн VIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен.

Комсомолăн Йĕпреç районĕнчи организацинче çамрăк комсомолĕцсене ĕçе йавăçтарас вырăнне, вĕсене вăрçнă, выгăварсем панă. Комсомол организацисем пионерсемпе ĕçлессине кирлĕ пек йĕркелесе йаман. Хальхи вăхăтра 13 отрйадра вожатăйсем çук.

Комсомол райкомĕн работникĕсем пуçламĕш организацисенче пулмаççĕ, выранти çитĕнӳсемпе çитменлĕхсене курмаççĕ. Ку вăл иккĕмĕш ыйтупа комсомол райком çекретарĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ Куçмин йулташ туна докладран та лайăх курăнать. Вăл хăйĕн докладĕнче ĕçе чăннипе çутатмарĕ, конкретлă примерсем кăтартса параймарĕ.

Пренире тухса калаçакансем комсомол йышне ӳстересси çитĕлĕксĕр, пелитвĕренӳ ĕçĕ начар пынине палăртрĕç. Районра пурĕ 44 пропагандис çитмест, çапах та комсомол райкомĕ пропагандиссем тупас тĕлĕшпе нимĕн те тумасть.

Комсомол организацинчи сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес, елекçĕсемпе карйериссене тупса палăртса вĕсене ответ тыттарас ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Акă, районри „Колхоз пурнăçĕ" хаçат редакцинче ĕçленĕ П. Дерре чылай комсомолецсем çинчен, весен еçесене тĕплĕн пĕлмесĕрех, хаçатра елеклĕ материалсем çырса кăларнă. Комсомол пуçламĕш организацинче ун çинчен сӳтсе-йавса тивĕçлĕ мерă йышăннă, анчах райкомра вăл ыйтăва халĕ те пăхса тухман-ха.

Комсомолăн йертсе пыракан органĕсен суйлавне хатĕрленес ĕç те йапăх пырать. Чылай организацисенче суйлав инструкцийĕпе те паллашман.

Малашне комсомол организацисен ĕçне ПСÇЛКС Тĕпкомĕн VI-мĕш пленумĕ йышăннă решенисем тăрăх урăхлатса çĕнетес тĕлĕшпе пуху решени йышăнчĕ.

Дм. Михайлăв.
Гл. Марушĕв.
В. Вишневский.

Пĕтĕм тĕнчери лару-тăрăва пăхса тухни

(Й У Л А Ш К И)

леме Англипе Франци сиксе тăрассине, агреççи тапăннă çĕршыва коллективлăн хӳтлессине, ССРС хутшăннипе мирлĕ державăсен фронтне тăвассине Гитлĕр çирĕп пĕлнĕ пулсан, вăл хăйĕн çарĕсене Чехословаки çине йама нихăçан та хăйайман пулĕччĕ. Англи флотне мобилизацилени çинчен, Францире резервиçсен пĕр пайне мобилизацилени çинчен, Совет Сойузĕпе Чехословаки хушшинче пĕрпĕрне пулăшасси çинчен тунă договăр тăрăх илнĕ хăйĕн обйазателствисене ССРС пурнăçа кĕртме хатĕр тăни çинчен пĕлтернине илтсен Германири çар çыннисем хушшинче пысăккăн хăраса ӳкни кĕтмен çĕртен пулман ĕнтĕ.

Унтан та ытларах. Мӳнхенри килĕшӳ империалисăмла хирĕçӳсем çивĕчленсе кайнине тӳрренех палартаканĕ пулса тăрать. Лондăнри тата Парижри „миротворецсем" агреççи йуххине хăйсене усала выранa йарас тесе тĕменле тăрăшсан та, вăл (агреççи) пурпĕрех вĕсене хирĕç çаваранса тăрать, мĕншĕн тесен халь пуçланнă империалисăмла иккĕмĕш вăрçа вăл рынăксемпе колонисене, çĕнерен пайлассишĕн пыракан вăрçа, демократилĕ тесе калакан державăсене хирĕç пыракан вăрçа. Инçет-Хĕвелтухăçĕнче Йапонин Китайри вăрçи Англин тата Пĕрлешӳлĕ Штатсен интересĕсене тӳррĕнех пырса çапать. Испанири интервенцине Англипе Францине сийен кӳрес майпа унта Германипе Итали влийанине тĕреклетес тесе пуçласа йана. Чехословакине туртса илни Франци хăрушсăрлăхне аркатса такнине тата Англин Йевропари, Балкансенчи тата Çывахри Хĕвелтухаçĕнчи интересĕсене çапнине пĕлтерет.

Йут çĕрсене туртса илес тĕлĕшпе агрессарсем план туса хатĕрлекен программа Англипе Франци интересĕсене татах та ытларах пырса çапать. Агрессăрсем умĕнче кайала чакнипе Англипе Франци акă ăçта пыраççĕ: тапăнса пыракан фашисла захватчиксене хирĕç вĕсен, хальхин пек мар, тата начартарах условисенче кĕрешмеле пулать. Англипе Франци хăйсен хăрушсăрлăхне хăйсемех ишĕлтереççĕ, сойузникĕсене çухатаççĕ, пĕчĕк çĕршывсен шанăçне çухатаççĕ.

„...Демократилĕ" государствăсен влаçа тытса пыракан çыннисем, уйрăмах Англин влаçа тытса пыракан консерваторлă çыннисем иртĕнсе кайнă фашисла пуçлăхсене „ĕçе ытла иртĕнесси патнех илсе çитерес мар" тесе ӳкĕтлес политикăпа чарăнса тăраççĕ, вĕсене çав вăхăтрах рабочисен тата нацилĕ-ирĕклĕх йухăмне хирĕç тытса пыракан вĕсен реакцилĕ-полицейски политикине „пĕтĕмĕшпех анланнине" тата çав политикăна пĕтĕмĕшпе илсен кăмăлланине ăнланса илме параççĕ. Англин влаçа тытса пыракан çыннисем кунта царисăм вăхăтĕнче вырăссен либералла-монархилĕ буржуасем тытса пынă пек политикăнах тытса пыраççĕ, çав буржуасем, патша политикин „иртĕннисенчен" хăраса, халăхран татах та ытларах хăранă, çавна пула вара патшана ӳкĕтлес политика çине, çапла вара халăха хирĕç патшапа **каварлашу** тăвас политика çине куçнă. Пурте пĕлеççĕ, Российари либералла-монархилĕ буржуазин çакăн пек иккĕлĕ политика тытса пынăшăн хăйарран сапланмала пулнă. Англин влаçа тытса пыракан çыннисемпе вĕсен Францири тата Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи тусĕсем те хăйсен историлĕ тавăрӳне туйанĕç, тесе шутлас пулать". („Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) партин историйĕ". XII-мĕш сыпăк).



Почтă ӳкерчĕкĕ: Почтă çӳретмели „ПС-40" самолетпа Мускав—Владивосток—Мускав маршрутпа сăнавлă хăварт вĕçев туса иртернĕ. Сăнавлă вĕçевре самолетăн вăтам хăвăртлăхĕ сехетре 305 километр пулнă.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмала): „ПС-40" самолет пилочĕ М. И. ТУТАЙĔВ тата бортмеханик-радист В. Д. КАЛАШНИКĂВ.

С. Йевзерухин фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

М. Й. Лермăнтăв сăввисем

* * *

Еп Байрон мар, еп урăх çын,
Халь паллă мар еп никама та,
Ун йевĕрлех тарса пурнатăп,
Анчах еп вырăс йурăçи.
Пуçларăм ир, вĕçлетĕп ир еп,
Сахалтарах ман ĕçĕмсем.
Ман ăшăмра, океанри пек,
Выртаççĕ ванчăк шанăçсем.
Кам-ши, салхулă океанăм,
Пĕлет санри вăрттăнлăха?
Кам ман шухăшсене ăнланĕ?
Еп хам? Йе турă? Йе никам
Йалт пĕлтерейĕмĕ халăха!

ПАРĂС

Курнать пĕчченçĕ парăс шуррăн
Кăвак тинĕс инçетĕнче.
Мĕн йут çĕрте шырать вăл хурлăн?
Мĕн йулнă ун çĕршывĕнче?

Хумсем выляççĕ, çил шăхратĕ,
Авнатĕ мачтă, хуçлĕ тен;
Çук, телейе вăл шырамасть-тĕр,
Тата тармасть-тĕр телейрен.

Ун айĕнче — çут шывăн шавĕ,
Çӳлтен хĕвел савăнтарать.
Пăлхавçă, вăл ыйтать çил-тăвăл,
Тупас пек канлĕх тăвăлра!

ЫЙТКАЛАКАН

Чиркӳ хапхийĕ умĕнче
Ыйткалакан çын шăппăн ларнă.
Сахал курман пуль ĕмринче
Хĕнхур — йалт шурнă, кăвакарнă.

Вăл ыйтнă çăкăр таткине,
Шутланă тăранма мăнтарăн.
Такам ун тăснă аллине
Чул муклашки кăна тыттарнă.

Çавăн пекех, хама савма
Куççульпелех еп тархасларăм.
Анчах ман лайăх туйăма
Ĕмĕрлĕхех ес улталарăн.

Сăвăсене **Усли Васçлейĕ** куçарнă.

Шăшисене пĕтерер

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ кĕрхи тырă калчисене, нумай çул хушши ӳсекен курăксене, çырла йавăççисене тата хăмла вырăнĕсене сыхласа хăварас майпа октăберĕн 5-мĕшĕнче йатарласа шăшисемпе кĕрешесси çинчен постановлени йышăнчĕ.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 150 пин гектар çинче шăшисемпе кĕрешме, кашни района уйрăм план çирĕплетсе панă. Райçĕрĕç пайĕсен, йалсоветсен тата колхоз правленисен октăберĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа хĕл пуличченех шăшисем сарăлнă вырăнсенче вĕсемпе кĕрешмелле. Шăшисемпе химилĕ йапаласемпе кĕрешессине йĕркелемеле. Çав вырăнсене выльăхсене йамала мар.

Малала епĕр шăшисене пĕтерессине çинчен чаранса тăрăпăр. Кăçал çанталăк уйар тата шăрăх тănипе шăшисем пур çĕрте те тенĕ пек йышлăн хунарĕç. Çавăнпа вĕсем кĕрхи тырă калчисене тата çамрăк сатсене пысăк сийен кӳме пултараççĕ. Çавнашкалах шăшисем тата ампарсемпе складсенчи тырăсене те нумай çисе йама пултараççĕ. Шăшисем сийен кӳрессине пĕтерес тесен, вĕсемпе кĕрешессине халех организацилес пулать. Хĕл пулаччен шăшисене пĕтĕмпех пĕтермеле.

Шăшисем вăрмансенче те вайлăн сарăлнă. Вĕсем вăрмансенчен колхоз уйхирне куçса тырпулсене, сатсене сийенлеççĕ. Химилĕ тата механикăлă майсемпе кĕрешни — шăшисене пĕтĕмпех пĕтерме май парать. Чи малтанах пахчасенчи çӳп-çапсене, сатсенчи тăкăннă çулçăсене пуçтарса, çĕрне сухаламала. Сатсем, питомниксем таврашĕнче çĕмелсем тата капансем тума кирлĕ мар. Кун пек тусан шăшисем çĕмелсемпе капансем айне пухăнаççĕ. Улмуççи тунисене çыхмала, улмуççи таврa купа тума тата улмуççи тунине улăмпа чĕркеме йурамасть.

Шăшисем питомниксене сийенлесрен, вĕсене таврала канав чавса тухма кирлĕ. Канав тарăнăшĕ 40 сантиметртан кайа мар, сарлакăшĕ 30 сантиметр пулмала. Çав канавсенче кашни 3—5 метртан тарăнрах шăтăксем (тарăнăшĕ 40 сантиметр) пулмала. Шăтăксен тĕпне отравить тунă тырă хумала, çийелтен улăмпа витмеле. Канавсене сăнаса тăмала: ишĕлекен айккисене тӳрлетмеле, хĕлле канавсенчи йура тасатмала.

Çак ĕçсемпе пĕрлех шăшисем сарăлнă сатсенче, питомниксенче тата парниксенче химилĕ имçамсемпе шăшисене пĕтерессипе те сарлакан усă курас пулать. Кĕрхи çĕртме сухине 20 сантиметр тарăнăш сухаламала.

Шăшисем хăмăлсем тата ытти çĕртен калчасем çине, утă капанĕсем айне куçса, вĕсене сийенлеме тытăннă çĕрте химилĕ имçамсемпе пĕтермеле.

Химилĕ имçамсене çапла майпа капансем айне лартаççĕ: имçама йатарласа тунă пĕчĕк йешчĕксем çине хурса капансем айне, тĕрлĕрен вырăнсене лартаççĕ. Йешчĕкĕн тăршшĕ 25 сантиметр, урлăшĕпе çӳллĕшĕ 10-шар сантиметр пулмала. Çав арчан шăшисем кĕмелĕх 4 йенче те шăтăксем пулма кирлĕ. Йешчĕк ăшĕнчи имçамсене çисе пĕтернĕ пулсан, тепĕр хут хумала.

Хирте апат пĕтсе çитнĕ май, шăшисем хĕл каçма анкартисене, капансем, çĕмелсем айне куçаççĕ. Çавăн пек ан пултăр тесен, вĕсен таврала канавсем чавмала. Канавсен тарăнăшĕ 50—60 сантиметр, сарлакăшĕ 40—50 сантиметр пулмала. Итемсем çинче улăмсем йе арпасем пулмала мар. 1000 шăши шăтăкне хума 15—20 килограм наркăмăшлĕ йӳçĕ натри, 400—500 грам çăкăр, йе 1—1,5 килограм тĕштырă кирлĕ. Ампарсемпе складсенче шăшисем хунанă пулсан, вара вĕсене химилĕ имçамсемпе пĕтермеле. Химилĕ имçамсене сыхлантса тыткаламала, вĕсем етемшĕн те сийенлĕ.

Агроном **Т. М. Никитин.**

Колхозниксем кино кураççĕ

Шăхасан районĕнчи кинобазă кăçал 24 колхозра саслă çĕнĕ кинокартинăсем кăтартнă. Вăл шутран „Волочаевские дни" фильма 14 колхозра кăтартнă. Районри культурă çуртĕнче халĕ кашни каç пекех кино кăтартаççĕ. Хальхи вăхăтра колхозсенче „Ленин в Октябре", „Папанинцы", „Петр I", „Китай дает отпор" тата ытти картинăсем кăтартаççĕ.

Çитес кунсенче „Год 19-ый", „Победа", „Город Ленина", „Пугачев" картинăсене кăтартма палăртнă.

Г. Исайĕв.

Пирĕн календар

Михаил Йурйĕвич Лермăнтăв

Вырăссен аслă поечĕ Михаил Йурйĕвич Лермăнтăв çурални 124 çул тулчĕ — вăл 1814 çулта октăберĕн 14-мĕшĕнче Пенза кĕпĕрнинчи Тарханы йатлă йалта çуралнă. Пулас поет çамрăклах тăлăха тăрса йулнă: хăй виçĕ çулта чухне унăн амăшĕ вилнĕ, ашшĕ унчченех вĕсене пăрахса уйрăлса тухнă пулнă. Хăйĕн ача чухнехи пурнăçне поет асламăшĕпе пĕрле пурăнса ирттернĕ.

1830 çулта Лермăнтăв Мускаври университета вĕренме кĕнĕ. Вăл вăхăтра ку университетра Белинский, Герцен тата Огарев та вĕреннĕ пулнă. Лермăнтăв хăйĕн йулташĕсенчен йаланах пăрăнса çӳренĕ, университетпа вăл тата студентсен пурнăçĕпе ытлашшийех интересленмен. Çав вăхăтрах Лермăнтăв университет çтенисен тулашĕнче çав тери тухăçлăн ĕçленĕ: нумай вуланă, çырнă. 1828 çултах литературă ĕçне пуçăннăскер, 1830—1831 çулсенче 200 йахăн сăвăсем тата поемăсемпе пйесăсем те çырнă.

Университетра Лермăнтăв нумай йах вĕренеймен. Професçăрсем, унпала килĕштереймесĕр, ăна ытла та „чарусăр" ача тесе пĕр çул вĕреннĕ хыççăн иккĕмĕш курса куçарман, каллех малтанхи курса ларса хăварнă. Лермăнтăв йулман. Университетран пăрахса тухнă, прапорщиксемпе йункĕрсем хатĕрлекен Петербургри шкула вĕренме кĕнĕ. Ку шкултан Лермăнтăв 1834 çулта вĕренсе тухнă. Вĕренӳ çулĕсем, хăй каланă тăрăх, „хăрушă" çулсем пулнă, çав çулсенче вăл нимĕн те çырайман. Вĕренсе тухнă хыççăн, полкра ĕçленĕ хушăра хăй чĕререн йуратнă ĕçне вăл малала туса пыма пуçăнать: „Маскарад" тата „Два брата" драмăсем, „Боярин Орша" поемă, сăвăсем те нумай çырать. 1837 çулта, Пушкин вилнĕ хыççăн „Смерть поэта" йатлă хăйĕн чи лайăх сăввине çырать Лермăнтăв. Ку сăвă вăл вăхăтра цензăрсем кĕлĕшмен пирки, ниçта та пичетленмен. Çапах вăл сăвă Российари мала туртăнакан шухăшлă интеллигентсем хушшине çиçĕм хăвăртлăхĕпе саланнă: пĕри вуланă ăна, вулакан сăмахĕсене вуншарăв, çĕршерĕн çырса илнĕ вĕсем те салатнă. Часах ку сăвă Николай I патша аллине те пырса çакланнă. Патша, хăйне чĕререн ылханса çырнă витĕмлĕ сăмахсемлĕ сăвă авторне арĕслесе Кавказа ăсатнă.

Çак сăвă Лермăнтăвăн политикăла сăввисенчен чи малтанхи сăвви пулман. Вăл унчченех, 1825 çулта декабриссене патша вĕлерттернĕ хыççăнах та нумай çавнашкал сăвăсем çырнă пулнă. Лермăнтăв декабриссен идейине чĕреренех килĕштернĕ.

Малтанхи ссылкăран поет часах таврăннă. 1833—1840 çулсенче Петербургра пурăннă хушăра Лермăнтăв хăйĕн творчĕствинче калама çук пысăк çитĕнӳсем тунă. Çак çулсенче вăл „Дума", „Поэт", „Мцыри" тата ача чухнех пуçланă „Демон" поемăна, „Герой нашего времени" романа çырса пĕтернĕ.

Вырăссен аслă критикĕ Белинский Лермăнтăва çав тери мухтанă. хăйĕн статйисенче вăл ăна Пушкинпа йунашар тăратнă.

1840 çулта Лермăнтăва каллех Кавказа ссылкăна йараççĕ. Унта кайнă чухне çырнă пĕр сăввинче вăл:

Прощай, немытая Россия—
Страна рабов, страна господ,
И вы мундиры голубые
И ты послушный им народ!

тесе сывпуллашнă.

1841 çулти ийуль уйăхĕнче поет пĕр Мартынăв хушаматлăскерпе дуельре çапăçса вилмелех суранланнă. Ийулĕн 27-мĕшĕнче вăл вилнĕ.

Лермăнтăв — аслă халăхăн аслă ывăлĕ. Вăл Пушкин пуçарса йанă литературăпа общĕствăлă ĕçе малала туса пыраканĕ пулнă. Унăн йачĕ Пушкин йачĕпе пĕрлех пирĕн халăх хушшинче нихăçан та манăçа йулмĕ.

Кану правипе усă куратпăр

ШĂХАСАН. Чарпуçĕнчи „Стахановец" промысла ертелĕ кашни çулсеренех хăйĕн лайăх ĕçлекен чăптаçисене канмали çурта, санаторисене, екскурçисене йарса кантарать. Вĕсен шучĕ çулран çул ӳссех пырать. Акă 1935 çулта Чуварлейри санаторине 1 çын, канмали çуртсене 10 çын, 1936 çулта канмали çурта 11 çын, екскурçине 2 çын, 1937 çулта канмали çурта 12 çын, екскурçине 2 çын, 1938 çулта екскурçине 4 çын, канмали çурта 10 çын кайса килчĕç.

— Епĕр ĕлĕк нуша тӳснĕ. Пирĕн пек чухăнсемшĕн никам та тăрăшакан пулман. Епĕр ĕçлени харампырсемшĕн, пуйансемшĕн çеç пулнă. Халĕ тин ĕнтĕ, Сталин саманинче савăнăçлăн та телейлĕн пурăнатпăр. Ачасем шкулсенче савăнса вĕренеççĕ. Çуллахи вăхăтсанче канмали çуртсене кайса сывлăха çирĕплетеççĕ. Акă, ман кăçал пĕр ачийĕ Верă канмали çурта кайса килчĕ, хам Ленинграда екскурçине кайса килтĕм, — тет савăнăçлăн стольар Михаил Никитин йулташ.

Ал. Иванов.

Йеремейĕв çемйи 354 пăт тырă, 808 тенкĕ укçан илет

ВĂРНАР. Ленин—Сталин партийĕ йалти хресченсене чухăнлăхран ĕмĕрлĕхех хăтарчĕ. Йалта халь телейлĕ те савăнăç йурри шăранать. Пирĕн колхозниксем ыран мĕнле пурăнасси пирки пăшăрханмаççĕ, тăрăшса ĕçлекен кашни колхозникăн пура тулли тырпул, карта тулли выльăх-чĕрлĕх пур. Акă, Малтикас йалĕнче пурăнакан Оçип Йеремейĕв çемйинех илер. Иртнĕ çул унăн çемйи колхозра ĕçлесе 495 пăт тырă илнĕ, кăçал 354 пăт тырă тата 808 тенкĕ укçан илет.

Колхозра ĕçлесе илнĕ тупăшпа Йеремейĕв йул. çĕнĕ пӳрт лартрĕ. Выльăх-чĕрлĕх усракан пулчĕ. Тухса çӳреме кĕпе-тумтирсем çителĕклĕ. Ачисем çĕвĕ çĕлемели машинă туйанна. Йеремейĕв патне кулленех хаçат-журналсем пырса тăраççĕ.

Ст. Улангай.

Пулни-иртнисем

○ В. Н. Орлов Куславккари йалпон Туканаш йалĕнчи уйрăмĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ чухне 6031 тенкĕ растратă тунă. Çак айăпран хăтăлас шутпа, вăл вăрмана кайса хăйне-хăй суранлатса пĕтернĕ. Вара йалпо правленине кайса вăрманпа иртсе пынă чухне ун çине такамсем тапăнса, портфĕлте пулнă 6000 тенкĕ ытла укçана вăрласа, хăйне хĕнесе пĕтерни çинчен пĕлтернĕ. Тĕрĕслесе пăхсан, Орлова никам та çаратманни, ăна вăл суйса калани палăрнă. Ăна вăл хăй те йышăннă.

Симулянт-растратчике арĕслесе ĕçе пăхса тухма суда панă.

Ответлă редактăр заместителĕ **В. ЙАКĂВЛЕВ.**

Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариатне квалификацилĕ машинисткă ТАТА завхоз кирлĕ

2—1

Шупашкар хула Совечĕн финанс пайĕпе финанс çекцийĕ 1938 çулти октăберĕн 15-мĕшĕнче, 6 сехетре каçхине, Колхозник çуртĕнче Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейĕцсен депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн финанс çекцин аслă пленумне пухаççĕ

КУН ЙĔРКИ:

1. III-мĕш квартăлти финанс планне тултарни çинчен тата кăçалхи IV-мĕш квартăлăн задачисем.
2. Октăбĕр уйăвĕ умĕнхи ăмăрту çинчен.

Финанс çекци членĕсен, хулари финанс активĕн, урамсенчи комитетсен членĕсен, комсодсен, ответлă инспектăрсен, финанс контроль постисен, предприйатисемпе учреждени руководителĕсемпе бухгалтĕрсен пымала.

Хула совечĕн финанс пайĕ. Финанс çекцийĕ.

Шупашкарти кооптехникума нимĕç чĕлхине вĕрентекен ПРЕПОДАВАТĔЛ кирлĕ

Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.

2—1

„РОССНАБСБЫТĂН" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКĔНЧИ УЙРĂМНЕ економист-финансист, економист-статистик ТАТА ученик-статистик ВАСКАВЛА КИРЛĔ.

2—2

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариатне ИКĔ МАШИНИСТКĂ васкавлă кирлĕ

Ĕç укçи килĕшӳ тăрăх.
Администрацине хуçалăх пайĕнче ыйтса пĕлмеле. Телефон № 0—82.

„ЧĂВАШ КОММУНĔ" ÇЫРĂНСА ИЛМЕЛИ ХАКСЕМ ПĔР УЙĂХА 2 Т. 50 ПУС. 3 УЙĂХА 7 Т. 50 П., 6 УЙĂХА 15 Т., ÇУЛТАЛĂКА 30 ТЕНКĔ. ПОДПИСКĂНА ÇЫХĂНУ УЙРĂМĔСЕМ, ПИСМОНОСЕЦСЕМ ЙЫШĂНАÇÇĔ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 535. Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 793. ф. 6. 58 × 84 п. л.